чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

31 /26437/ № Юн кун, 2014, нарăс (февраль), 19 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Чăваш Ен парăмлисен шутĕнче мар

Ĕнер Раççей транспорт министрĕ Максим Соколов селектор видеоканашлăвĕ ирттерчĕ. Унта республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР транспортпа çул-йĕр хуçалăх министрĕ Михаил Янковский тата Конкуренципе тарифсен политикин патшалăх службин ертӳçи Альбина Егорова хутшăнчĕç.

Федераци министрĕ пĕлтернĕ тăрăх – çĕр-шыври хула çумĕнчи чукун çулсемпе пассажирсене илсе çӳрес ĕçри лару-тăру йывăр. Сăлтавĕ мĕнре-ха? Регионсем "Раççей чукун çулĕ" обществăн вырăнти предприятийĕсем пассажирсене илсе çӳресе куракан тăкака саплаштарма субсиди кирлĕ чухлĕ уйăрмаççĕ. Виçĕ субъект пĕр пус та парасшăн мар. "Малашне те кун пек пулсан хуласен çумĕнчи маршрутсен пуласлăхĕ питĕ пăшăрхантарать", – терĕ общество гендиректорĕ Владимир Якунин.

Чăваш Ен парăмлă регионсен шутĕнче мар. Пĕлтĕр вăл хула çумĕнчи чукун çул транспорчĕн тăкакĕсене саплаштарма республика хыснинчен 52 млн тенкĕ уйăрнă, кăçал та чылай куçарасшăн. Кунсăр пуçне шкул ачисемпе студентсен билет хакĕн пĕр пайне саплаштарма Чăваш Ен бюджетĕнчен 4 млн тенке яхăн яма палăртнă.

Видеоканашлура Раççей чукун çулĕ тӳсекен тăкака саплаштарма субъектсен хыснинчен кĕмĕл уйăрас ыйтăва тĕплĕн сӳтсе яврĕç. Министр обществăпа регионсен пысăк пайĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшӳсене халĕччен те алă пусса çирĕплетменнине, субъектсен пассажирсене илсе çӳрекен предприятисен умĕнчи парăмĕ пысăккине палăртрĕ, ăна пĕтерме чĕнсе каларĕ.

■ С.СЕРЕГИН

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ

Раççей Федерацийн Правительствин 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнче «Уйрăм категорири çынсен хăйсен должноç тăрăмне е служба /должноç/ тивĕçĕсене пурнăçланă май парне илни, парнене тавăрса пани тата унăн хакне палăртни, сутни /тӳлесе илни/ тата ăна сутса тунă укçа-тенке куçарса пани пирки пĕлтермелли йĕрке çинчен» кăларнă 10-мĕш йышăнăвне пурнăçламалли мерăсем çинчен

Чăваш Республикинче коррупципе кĕрешес ĕçе патшалăх йĕркелесе пырассине малалла лайăхлатас тĕллевпе, Чăваш Республикин Конституцийĕн 72 тата 73 статйисене тĕпе хурса **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисен Раççей Федерацийĕн Правительствин 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 10-мĕш йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ Уйрăм категорири çынсем хăйсен должноç тăрăмне е служба ĕçĕсене пурнăçланă май парне илни, парнене тавăрса пани тата унăн хакне палăртни, сутни /тӳлесе илни/ тата ăна сутса тунă укçа-тенке куçарса пани пирки пĕлтересси çинчен калакан Типлă положение /малалла – Типлă положени/ тĕпе хурса тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕç-хĕл уйрăмлăхĕсене шута илсе уйрăм категорири должноç тăрăмне е служба /должноç/ тивĕçĕсене пурнăçланă май парне илни, парнене тавăрса пани тата унăн хакне палăртни, сутни /тӳлесе илни/ тата ăна сутса тунă укçа-тенке куçарса пани пирки пĕлтермелли йĕркесене çирĕплетессине пĕр уйăхра тивĕçтермелле.

2. Чăваш Республикин патшалăхăн ытти органĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳçисене Типлă положение тĕпе хурса тивĕçлĕ йĕркесене çирĕплетме сĕнес.

3. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, нарăс, 18, 22 №.

Лару

Хăтлăх тĕп вырăнта пултăр

Ĕнер республикăн Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствин коллегийĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ.

Олег Марков министр строительство, пурăнмалли çурт-йĕр, коммуналлă хуçалăх комплексĕн пĕлтĕрхи ĕç-хĕлĕ тата кăçалхи тĕллевĕсем çинчен доклад турĕ. «Строительствăра ĕçлекен 2500 ытла предприятие шута илнĕ, – терĕ вăл. – 28,6 пин çын вăй хурать. Республикăра туса кăларнă тавар, металл шутланман минерал продукцийĕ хатĕрлекен предприятисем пурнăçланă ĕçсен тата пулăшу калăпăшĕ иртнĕ çул виçĕм çулхинчен – 8,8%, металл шутланман минерал продукцийĕн ытти производство индексĕ 19,2% пысăкрах пулнă. Строительство ĕçĕсене 2012 çулхинчен 2,4% ытларах пурнăçланă».

Пурăнмалли çурт – 1,5%, уйрăммăн илсен Шупашкарта 13,3% нумайрах хута янă. Кашни çын пуçне федерацин Атăлçи округĕнче – пĕрремĕш вырăнта.

Республика Пуçлăхĕ строительсен умĕнче Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта газ пăрăхĕсене юплентерес, Атăл леш енчи поселоксене газ çитермелли проектăн шырав ĕçне пурнăçлас тĕллев тăнине аса илтерчĕ. «Газпром» АО кунта 1,1 млрд тенкĕ хывма шантарнă.

«Чăваш Республикинчи çынсене кивĕ çурт-йĕр фондĕнчен çĕнĕ хваттерсене куçарасси» программăпа килĕшӳллĕн 2012-2013 çулсенче 554 çын /228 çемье/ çĕнĕ пӳрте хăнасем пухнă, – терĕ вăл. – Вĕсем юхăнчăк 67 çуртран куçнă. Программа малалла тăсăлĕ. Хваттерсем тума 2013-2017 çулсенче тата 1,4 млрд тенкĕ уйăрма пăхнă. Çапла вара кăçал тата çитес çулсенче çĕр-çĕр çемье ыйтăвне татса парăпăр».

ЧР Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн нумаях пулмасть çирĕплетнĕ ертӳçи Олег Бирюков строительствăра, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра федераци саккунĕсене, вăйра тăракан йĕркене пăснă тĕслĕхсемпе паллаштарчĕ. Михаил Игнатьев вăл ертсе пыракан службăран отрасльти çитменлĕхсене тăрăшыв çине ытларах кăларасшăн çине тăрса вăй хума ыйтрĕ. «Çуртсене хăтлă та илемлĕ тумалла, – терĕ М.Игнатьев. – Пахалăх пысăк пĕлтерĕшлĕ».

Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов иртнĕ çул пурăнмалли çурт-йĕр, ача сачĕсем, социаллă пурнăç объекчĕсем тăвассине, урам-тăкăрлăка, картишсене, тӳрем-лапама хăтлăлатас тĕлĕшпе еплерех ĕçлени çинчен каласа пачĕ. 2013 çулта отрасльти укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ пысăкрах пулнă. Республика Пуçлăхĕ министерство ĕçне пĕтĕмлетсе строительсен кăçал тата тухăçлăрах, ăнăçлăрах вăй хума май пуррине палăртрĕ.

■ Юрий МИХАЙЛОВ

Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар"Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 460-86 тенкĕ.

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Поэта асра тытса

Нарăс уйăхĕн вĕçĕнче Наци библиотекинче çулленех Чăваш халăх поэчĕн Геннадий Айхин Асăну кунĕсем иртеççĕ. Кăçалхине Геннадий Николаевич çуралнăранпа 80 çул çитнине (1934-2006) халаллă.

Мероприятисен ярăмĕнче – «Геннадий Айхин литература картти» курав. Ăна сайра тĕл пулакан фондăн «Айгиниана» коллекцийĕн материалĕсенчен хатĕрленĕ.

Курав хăйне евĕрлĕхпе палăрса тăрать. Кĕнекесемпе, картинăсемпе, сăн ӳкерчĕксемпе, пĕчĕк калăпăшлă кăларăмсемпе усă курса поэтăн литература карттине – хăйĕн пултарулăхĕпе йĕркеленĕ литература хутлăхне – «ӳкернĕ».

Куравра «Тăван кĕтес туртăмĕ», «Европа тата Айхи», «Ытти çыран» пайсем пур. Вĕсенче шăпах вăл е ку тапхăрпа е самантпа çыхăннă произведенисене вырнаçтарнă. Карттăн тепĕр пайĕ чĕлхепе çыхăннă. Геннадий Айхин ĕçĕсене тĕнчери 52 чĕлхене куçарнă, кĕнекисене 36 çĕр-шывра пичетленĕ, хăй 20 патшалăха çитсе курнă.

Н.СМИРНОВА.

Сочие çитсе курнă

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Малов тата «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регионти уйрăмĕ пулăшнипе çамрăк спортсменсемпе вĕсен тренерĕсем Сочие çитсе курнă.

Иртнĕ çул Николай Владимирович вĕсен хушшинче ятарлă конкурс ирттернĕ. Ĕçре, вĕренӳре тата спортра палăрнисене Олимп вăйăисене кайма сертификатсемпе хавхалантарнă. Çак чыса камсем тивĕçнĕ-ха? Етĕрне районĕнчи спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Александр Семенов, Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕ Евгений Паркин, Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи çамрăк йĕлтĕрçĕ Андрей Петрейкин тата унăн вĕрентекенĕ Светлана Петрейкина. Вĕсем Олимп хулипе паллашнă, хоккей матчĕнче тата сноубордçăсен ăмăртăвĕнче Раççей спортсменĕсемшĕн «чирленĕ», чемпионсемпе призерсене чыслана церемонисен илемĕпе киленнĕ.

Е.АНДРЕЕВ.

Химиксен хулинче – çамрăк тĕпчевçĕсем

Çĕнĕ Шупашкарти А.И.Андрианов ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен аталанăвĕн центрĕнче «Ăслăлăх. Пултарулăх. Аталану» çамрăксемпе шкул ачисен регионсен хушшинчи ăслăлăх конференцийĕ иртнĕ.

Вăл Чăваш Республикинчи тата Мари Элти тĕрлĕ хулари çамрăк тĕпчевçĕсене вун çиччĕмĕш хут пухнă. Кăçал унта 447 яшпа хĕр хутшăннă. Асăннă мероприятин тĕп тĕллевĕ – пултаруллă ачасемпе çамрăксене тупса палăртасси, хавхалантарасси. Жюри (унăн йышĕнче – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн преподавателĕсем) 375 тĕпчев ĕçне пăхса тухнă. Пурĕ 25 секци ĕçленĕ. Кăçал конференци йĕркелӳсисем «Хула историйĕ – манăн истори», «Хими енĕпе чи лайăх ăслăлăх ĕçĕ», «Çĕнтерӳ салтакĕсем», «Чăваш Ен пуласлăхĕшĕн», «Спорт – манăн пурнăçăм!», «Чăваш Енĕн культура пуянлăхĕ» ятарлă номинацисем кĕртнĕ. Çĕнĕ Шупашкар хула пуçлăхĕ Олег Матвеев çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе тата укçан премипе чыслана. Номинантсене те парнесемсĕр хăварман. Пухăннисене çавăн пекех «Экспромт» хореографи студипе «Лик» ташă театрĕ хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарнă.

А.ГРОМОВА.

Уява туссене йыхравларĕç

Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ялĕнчи культура учрежденийĕ уçăлнăранпа 40 çул çитрĕ. Кунта тăрăшакансем пĕлтĕр Раççей Федерацийĕн Правительствин – 100, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентина Петрова 50 пин тенкĕлĕх хавхалантарăвне тивĕçрĕç.

Иртнĕ çул культура вучахĕн çуртне 1,5 млн тенкĕлĕх тĕпрен юсаса хăтлăлатнă хыççăн кунта ăшă та çутă, капăр та таса. Час-часах тĕрлĕ мероприяти иртет, вунна яхăн кружок ĕçлет.

Культура учрежденийĕнче вăй хуракансене савăнăçлă пулăмпа район тата ял тăрăхĕн администрацийĕсен пуçлăхĕсем Андрей Шестаковпа Николай Пантелеймонов, Шупашкарти «Трак ен» ентешлĕх ертӳçи Алексей Львов, сумлă ентешсем – Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ӳнерçи Георгий Николаев тата ытти сем ăшшăн саламларĕç, парне кӳчĕç. Район администрацийĕ юрă-кĕвĕ инструменчĕсем туянма 30 пин тенкĕлĕх сертификат пачĕ.

«Айтăр, пĕрле савăнар» концерта вырăнти артистсемпе пĕрле районти пултарулăх коллективĕсем те хутшăнчĕç.

В.ДАНИЛОВ.

Парне – хоккей лапамĕ

Куславкка районĕнчи Кунер шкулĕнчен вĕренсе тухнă Сергей Посредников ял спортсменĕсене пысăк парнепе – хоккей лапамĕпе – савăнтарнă.

Çак пулăма халалласа ялта пысăк уяв иртнĕ. Хăйăва каснă хыççăн çĕнетнĕ лапамра çамрăк хоккеистсемпе ветерансен командисем ăмăртăва тухнă. Хисеплĕ хăнасем – Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен 4-мĕш спорт шкулĕн директорĕ Олег Салтыков тата Остап Перков инструктор шкула Олимп çулăмне илсе килнĕ. Ял çыннисем тĕнче ăмăртăвĕн символне тытса курнăшăн та кăмăллă пулнă, асăнмалăх сăн ӳкерĕннĕ.

Ялта хĕллехи кунсенче унччен те каток пулнă, паян унта хоккей курупки, спортсменсемпе куракансене лармашкăн саксем вырнаçтарнă. Хоккеистсем халĕ каçхине те каток çине тухма пултараççĕ – йĕри-тавра çутă. Çĕнĕ лапам уçăлни конькипе ярăнма юратакансене те хавхалантарнă.

А.МИХАЙЛОВ.

ПУБЛИЦИСТ ШУХАШĔ

«ЧĔЛХЕМ! САНПА ТĔНЧЕ УÇÇИ ТЫТАТĂП...»

Нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунĕ. Шăпах çак куна суйласа илесси акă мĕнпе çыхăннă: 1952 çулта Пакистан полицийĕ бенгаль чĕлхине хĕвел тухăç Пакистанра /1971 çултанпа Бангладеш/ патшалăх чĕлхи туса хурас тĕлĕшпе халăха ура çине тăратнă темиçе студента персе вĕлернĕ.

ЮНЕСКОн 1999 çулхи чӳк уйăхĕнчи Генеральнăй конференцийĕнче Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунĕ пирки йышăну кăларнă. Пĕрремĕш хут ăна 2000 çулхи нарăсăн 21-мĕшĕнче паллă тунă. Тĕллевĕ – чĕлхе тата культура нумай енлĕхне сыхласа хăварасси.

Тĕнчере хальхи вăхăтра 6 пине яхăн чĕлхе. Кашниех вăл е ку халăх культурине, ăс-хакăлпа пурлăх еткерлĕхĕн аталанăвне палăртать. Чĕлхе пирки вырăссен паллă писателĕ Лев Толстой çапла каланă: «Чĕлхе – наци чунĕ. Чĕлхе – шухăшăн, туйăмăн, тĕллевĕн чĕрĕ юнĕ». Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн сăвă йĕркисем те аса килеççĕ: «Чĕлхем! Санпа тĕнче уççи тытатăп, шухăшлама вĕрентрĕн эс мана». Пирĕн несĕлсем «чĕлхеллĕ çын Чĕмпĕрте те вилмен» е «чĕлхе Атăла та картлать...» теннĕ.

Тăван чĕлхе халăхăн ĕмĕрсенчен килекен паха опытне йышăннă. Вăл тăхăмсен ăрăвĕсемпе пин-пин çул хушши вăй илсе аталанса пынă. Унти кашни сăмах – таса ылтăн пĕрчи. Çавăнпа та чĕлхепе тирпейсĕр усă курни е ăна хисеплеменни халăха пĕтме хушнă пекех туйăнать.

ЮНЕСКО тĕпчевĕсем чуна çӳçентерсе яраççĕ. Çĕр çинчи 6 пине яхăн чĕлхерен çурри пĕтес хăрушлăхрамĕн. Чĕлхесен 96 проценчĕпе тĕнчери халăхăн 4 проценчĕ çеç каласать иккен. Çулленех вун-вун чĕлхе çут тĕнчерен кайса пырать. Ăсчахсем палăртнă тăрăх – вăл е ку чĕлхе ан пĕттĕр тесен унпа 100 000 çынран кая мар каласмалла. Йăхсене паттшалăха пĕрлештернин сиенĕ акă мĕнре пулнă: вĕсене пĕр чĕлхепе çеç усă курмалла тунă.

Хальхи вăхăтра çĕнĕ технологисем вăй илни сахал йышлă халăхсемшĕн тата пысăк чăрмавсем кăларса тăратрĕ. Интернетра çук чĕлхе хальхи пурнăçшăн вилĕ шутланать. Унти хыпарлавăн 81 проценчĕ акăлчанла. Ун хыççăн, чылай кая юлса, нимĕç тата яппун чĕлхисем /2-шер процент/, француз, испан, скандинав чĕлхисем /1-ер процент/ пыраççĕ. Ытти пурте пĕрле вебстраницăн 8 процентне йышăнать.

Чĕлхе çухални халăх пĕтнипе танах. Глобализацин ахăр самани нихăшне те шеллесе тăмасть, çĕр çинчен çуллен вун-вун халăх «каять».

Пире, чăвашсене, тăван чĕлхе шăпи шухăшлаттарать. Канăça çухатма ЮНЕСКОн 2009 çулхи тишкерĕвĕ те хистерĕ. Ăна ĕненес тĕк – Раççейри 136 халăх тăван чĕлхипе каласма пăрахас хăрушлăх пур. Çав «картара» – чăваш чĕлхи те.

Кун пирки хăй вăхăтĕнче массăллă информаци хатĕрĕсенче çырнă-ха, «çавра сĕтел» хушшинче каласусем те ирттернĕ. Çав вăхăтрах хăшĕ-пĕри хыпара йĕкĕлтĕшсе йышăнма пăхрĕ, «чăваш нихăçан та пĕтмест» теме хăтланчĕ. Анчах статистика кăтартăвĕсем савăнтармаççĕ-çке. Юлашки 20 çулта халăхăн чĕрĕк пайĕ сахалланнă.

Мĕншĕн? Демографири йывăр лару-тăрăвăн витĕмĕ те пур ĕнтĕ. Ялта та паян ачапча сассине унччен хи пек анлăн илтеймĕн. Вилекенсен йышĕ çуралнисенчен пĕчĕк мар. Глобализаци, вырăсла информаци хаттăрĕсен йышĕ ÿссе пыни, икĕ чĕлхе пĕлекен чăваш вырăсла кăларăмсем патне туртăнни, чăваш шкулĕнче тăван чĕлхене питĕ сахал вĕрентни... Театр тумтир çакмалли вырăнтан пуçланать, халăх шăпипе пуласлăхĕ – шкултан килет, унтан вăй илет, тымарланать. Малтан – анне шкулĕнчен /амăшĕ чăваш чунлăскер пулсан/, унтан пĕр юрăри пек каласан – «букварьти ÿкерчĕкрен» ...11 çул пĕтĕмĕшле вăтам пĕлÿ пухать çитĕнекен ăру, тепĕр 5-6 çул – аслă шкул. Çур ĕмĕр шкулта иртет тейĕн. Çавăнпа та ача мĕнле чунлă ÿссе çитĕнесси вĕрентÿçĕсенчен, шкултан питĕ нумай килет. Шел те, шкулсенче федераци шайĕпе вырăс чĕлхине çеç пысăк статус панă, ытти халăх чĕлхисене вара регионсене «тыттарнă». «Наци – регионсен компоненчĕ» тесе пĕтĕмĕшле шкулсенче те, вузсенче те курăнми, аран-аран сисмелĕх-туймалăх вырăн уйăрнă. Ку шăпах çĕршывра наци политики çуккине пĕлтерекен пулăм.

Республика çухалса пыракан халăхăн резервацийĕ пулса ан кайтăр тесен мĕн тумалла-ха? Манăн шухăшăмпа – шкула илес тĕк унти тăван чĕлхепе вырăс чĕлхи шайлашăвне сăнасах тăмалла, хамăр килте хамăрах хуçа пулма тăрăшмалла. Çакна та манмалла мар: чĕлхе кун-çулĕ вăрăм пуласси унпа общество-политика тытăмĕнче мĕнле усă курнинчен нумай килет. Чăваш чĕлхи республикăра патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ пулсан та, ăна аталантарма программа йышăннă пулин те – çивĕч ыйту татăлман-ха. Ытларах чухне çав ĕçсем хут çинче çеç юлаççĕ, пурнăçра вара пачах урăхла.

Статистика патне тепĕр хут тавăнар-ха: чăваш халăхĕ 16-мĕш ĕмĕр çурринчен пуçласа /тутар-монгол, Тамерлан т.ыт. геноцичĕ хыççăн/ унă хут ÿснĕ, анчах çапла майпах чакма пуçланă.

Çичĕ çул каялла Раççейре Вырăс чĕлхин çулталăкне ирттернĕччĕ. Пирĕн те кун пирки «чан çапма» вăхăт. Кая юлас марччĕ. Атту Çеçпĕл Мишши пĕр ĕмĕре яхăн каяллах «Йывăр шухăшсем» сăввинче асăрхаттарнă çак йĕркесем пурнăçа кĕрĕç:

Тăван çĕр-шыв, е сан вăю пĕтрĕ?
Е чăваш чĕлхин хăват çĕтрĕ?

■ Надежда СМИРНОВА

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çукалать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1 градус ăшă, каçхине 3 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 741 мм, сывлăшри нӳрĕк 90 процент.

Кун тăршшĕ 9 сехет те 55 минут.

Ыран ăмăр çанталăк пулать, юр çукалать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1, каçхине 7 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 745 мм, сывлăшри нӳрĕк 83 процент.

Кун тăршшĕ 9 сехет те 59 минут.

Патшалăх Канашĕ: 20 çул

«Пĕр тĕллевпе тăрăшăпăр...»

Кăçалхи çул Чăваш Ен парламенчĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ тата сумлă пулăмпа палăрса юлать: Патшалăх Канашĕ йĕркеленнĕренпе çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче 20 çул çитет. Шăпах çав кун пĕрремĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш сессийĕ иртнĕ. Çак юбилей тĕлне пиллĕкмĕш суйлаври депутатсем унченхи ĕçтешĕсен ĕç-хĕлне пĕтĕмлетĕç, асăннă тапхăрти ырă опыта анлăн çутатакан «Государственный Совет Чувашской Республики: 1994-2014 г.г.» кĕнеке пичетленсе тухĕ.

Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов çак кунсенче республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен тата электрон кăларăмĕн журналисчĕсемпе тĕл пулчĕ. Хаçатçăсемпе радиожурналистсен ыйтăвĕсене çавăн пекех Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Николай Малов, Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсен комитечĕн ертÿçипе Петр Красновпа унăн çумĕ Игорь Кушев хуравларĕç. Пресс-конференцире Чăваш Енри парламентаризм аталанăвĕн историйĕ, юбилейлă çулра пурнăçламалли тĕллевсем çинчен сăмах пычĕ. Юрий Алексеевич пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш парламентарийĕсем малашне парламент итлевне, правительство сехетне, ăслăлăхпа практика конференцине, «çавра сĕтел» ирттерессине çирĕп йĕркене кĕртесшĕн. Патшалăх Канашĕ 20 çулултарнине паллă тунă чухне депутатсемпе аппаратра ĕçлекенсем коллективсенче тăтăш пулĕç, шкул ачисемпе тата студентсемпе курнăçĕç.

Журналистсем муниципалитет йĕркеленĕвĕнчи икĕ влаçлăх /район администрацийĕн пуçлăхĕ – район пуçлăхĕ/, республикăри саккун кăларакан орган федерацин влаç органĕпе тытакан çыхăнăвăн ыйтăвĕсене çĕклерĕç. Сăмахран, пĕлтĕр пирĕн Патшалăх Канашĕн депутатĕсен корпусĕ РФ Патшалăх Думинчи ĕçтешĕсем патне социаллă сферăри тата агропромышленноç комплексĕнчи çивĕч хăш-пĕр ыйтăва татса пама сĕнÿпе тухнă. Шел, темиçе сĕнĕвĕ Мускавристен «сĕтел сунтăхĕнче» юлнă.

Юрий Попов спикер чăваш парламенчĕпе тачă çыхăнса ĕçленĕшĕн журналистсене тав турĕ: «Малашне те пĕр тĕллевпе тăрăшасса шансах тăратăп...»

Тĕрлĕ номинацире палăртĕç

Республика парламенчĕ Чăваш Ен журналисчĕсен пĕрлĕхĕпе пĕрле уйрăм журналистсемпе массăллă информаци хатĕрĕсен редакцийĕсем валли «Чăваш Республикин Патшалăх Канашне – 20 çул» темăпа конкурс ирттерме палăртнă. Конкурса 2013-2014 çулсенче пичетленнĕ статьясене е эфира тухнă видео- тата аудиоматериалсене йышăнаççĕ. Теми – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата депутачĕсен ĕç-хĕлĕ.

Конкурса килнĕ материалсен çĕнтерÿçисене «Патшалăх Канашĕ е унăн депутачĕ çинчен хатĕрленĕ чи лайăх телекăларăм», «Патшалăх Канашĕ е унăн депутачĕ çинчен хатĕрленĕ чи лайăх радиокăларăм», «Пичет кăларăмĕнче Патшалăх Канашĕ е унăн депутачĕ çинчен çырнă чи лайăх материал» номинацисенче палăртĕç.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов хăйĕн ячĕпе «Пултарулăхри ÿсĕм» ятарлă парне çирĕплетнĕ.

Конкурс материалĕсене ЧР Патшалăх Канашĕнче нарăсăн 15-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 26-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

«Терминалпа» çурт тăватпăр

«Вăхăт – укçа!» – шăпах çак тĕслĕх

Çуркунне çывхарать, çакна термометрăн «плюслă» кăтартăвĕсемпе çанталăк та систерет. Тĕлĕнмелле те, анчах халех нумай çыннăн кăçал хăйсен çуртне çĕклес тĕллевлĕ планĕсемпе çыхăннă, хĕлле «шăнса ларнă» ĕмĕчĕсемпе туйăмĕсем вăранаççĕ. Çавна май нумайăшĕ çак тĕллевпе çемьен пĕтĕм бюджетне кăларса хума хатĕр. Чăваш Енĕн ĕçченлĕх кăтартуллă халăхĕшĕн ку йĕркеллĕ, апла пулин те хăйсене шанакан, пурăнмалли çурт çĕклеме пултаракан çынсем пирки общество паттăрĕсем тени те вырăнлă. Унашкаллисем йышлă, çакă, килĕшсемĕр, питĕ савăнтарать.

Реклама

1-мĕш канаш

Эпир нумай çын пуçласа стройка пуçарнине ăнланатпăр, вĕсен строительство технологийĕне те, паха материалсемпе тата ĕç вăйĕпе усă курассипе те çыхăннă нумай ыйтăва татса пама тивет. Тата, чи пĕлтерĕшли, пысăк тăкакăр ниепле те май çук. «Терминалпа» çурт тăватпăр» рубрика, строительство тапхăрĕ умĕн суллен пичетленекенскер, тĕп тĕллеве татса памашкăн пулăшма тивĕç. Вăл – çурт-йĕр тăвакансене уйрăм çурт çĕкленĕ чух тухса тăракан мĕн пур ыйтăва тĕрĕс тата маларахах хаклама пулăшасси. «Терминал» ТК суту-илÿ залĕсенче **çуртăн килĕшекен проектне тÿлевсĕр илме** /каталогра – 3600 ытла проект/, «Терминал» хутшăннипе туса лартнă нумай çуртăн сăн ÿкерчĕкĕсемпе паллашма май пур. Тата – **строительство валли кирлĕ пĕтĕм материала суйласа илме. Суту-илÿ комплексĕн склачĕсенче кирпĕч кăна 300 йышши тата тĕсли – килĕшекеннине тупатăрах! Çурта вĕçне çитиччен туса пĕтермешкĕн саккас пама, специалистсенчен тÿлевсĕр консультаци илме те пулать.**

«Терминал» ТК паян – регионти стена çĕклемелли материалсемпе, ытти мĕн пур строительство материалĕпе курттăмăн тивĕçтерекен чи пысăк база. Унăн территорийĕнче кирпĕчпе блоксен питех те пысăк калăпăшĕ упранать, пысăк кирпĕч завочĕсенче те ун чухлĕ кураймăн – кунта чылай ытларах. Стройматериалсен пысăк калăпăшне упрама май пурри хайхи **кирпĕчех хĕллехи чылай пĕчĕкрех хаксемпе туянма, строительство тапхăрĕ хĕрсе çитнĕ вăхăтра унăн хакĕ тăруках ÿссе каяссинчен сыхланма пулăшать. Кăтартăвĕ курăмлă: «Терминалта» – яланах курттăм хаксем, урăхла каласан вĕсем ытти нумай поставщикăннинчен палăрмаллах пĕчĕкрех.**

Вăрттăнлăх мар, хĕлле продукци сутăнманнине кура заводсен хăйсен кирпĕчне дилерĕсемпе представителĕсене пĕчĕкрех хакпа, хăй хаклăхне çывăххипе, тиеттерсе яма тивет. Унсăрăн вĕсен склад валли ĕçлеме е производствăна вăхăтлăха чарса лартма тивĕччĕ. Стройматериалсем кăларакан предприятиссем çулленех хĕлле çухатнă тупăша çулла хаксене ÿстерсе саплаштарма тăрăшаççĕ. Кашни çул çапла, çав шутра энергоносительсен тата чĕр тавар хакĕсем ÿсмен, умĕнхи çулхи шайрах юлнă чухне те. Тĕллевĕ пĕрре – ĕçлесе илесси. Вĕсене куншăн ÿпкелеме, пушшех çапла тумашкăн чăрмантарма йывăр.

Хальлĕхе вара çак сĕнĕве шута илĕр: **строительство валли тĕп материала /кирпĕч, блоксем/ шăпах хĕлле туянмалла. Нарăс «пĕчĕк хаксен» уйăхĕ-ха, эппин, пирĕн суту-илÿ комплексне килмешкĕн вăхăт. Ку материалсем туяннă чух 20% таран перекет кÿрет. «Вăхăт – укçа!» – питĕ тĕрĕс! Туяннă кирпĕче «Терминал» склачĕсенче тÿлевсĕрех кирек мĕн вăхăт упрама юрать.**

Малашне «Терминалпа» çурт тăватпăр» рубрика айĕнче перекетлĕх вăрттăнлăхĕсене уçăпăр, «хăймине пухма» чăрмантарасран сыхланса сиртен ятарласа пытаракан информацине паллаштарăпăр. Вулакансем килĕштернĕ «Терминалпа» çурт тăватпăр» рубрика пирки çурт-йĕр тăвакансенчен ыррине кăна илтетпĕр – вĕсем унăн уссине пĕлтĕрех хаклама ĕлкĕрнĕ. Пирĕн канашсем нумайăшне хăйсен çуртне тăвассипе çыхăннă ĕмĕтне тÿрре кăларма пулăшнине куратпăр, туятпăр. Кăçал та шанчăклă тĕрев парăпăр – эпир сăмаха çилпе вĕçтерместпĕр!

Сире суту-илÿ комплексĕнче çак адреспа кĕтетпĕр: ***Шупашкар хули, Канаш çулĕ, 7/1 çурт, Алькеш, «Терминал» ТК; /8-8352/ 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.***

Яваплăх

Шурă халата варалана инкек

Патăрьел районĕн çучĕ райбольницăн ачасен уйрăмĕн заведующийĕ Муслима Якушева тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнă. Ăна Уголовлă кодексăн темиçе статйипе айăплана: çăмăлттайлăхшăн, взятка илнĕшĕн, службăри ултавшăн.

Çак пăтăрмах пирки эпир хăй вăхăтĕнче çырнăччĕ, çапах аса илтерни вырăнлă. Следстви комитечĕн вырăнти пайĕ тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – пĕлтĕрхи кăрлачăн 18-мĕшĕнче заведующи ерçейместĕп тесе 6 çулти хĕр ачана, фельдшер «ОРВИ. Диспепси синдромĕ» диагнозпа илсе килнĕскере, йышăнман, пăхман, тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ кÿмен, госпитализацилемен. Çавна май çывăх çыннин пĕчĕкскере больницăран илсе кайма тивнĕ. Анчах темиçе сехет иртсен хĕр пĕрчи хăйне пушшех йывăр туйма пуçланă та – вилес пекскере каллех сиплев учрежденине илсе килнĕ. Шел, халь тин ăна çăлса хăварма май килмен. Суд-медицина экспертизи вилĕме аспираци пневмониче, ÿпке-чĕре сывă пулманнипе пушшех йывăрланнăскер, сăлтавланине çирĕплетнĕ.

Тĕпчев Якушевăн тепĕр «çылăхне» те тăрă шыв çине кăларнă. Вăл пĕр хĕрарăмран взятка илнĕ. Унăн пĕчĕк ачине пăхмасăрах амăшне ĕçлеме пултарайманнин хутне, ĕçрен хăтармалли больничнăй илме ирĕк параканскере, туса панă. Куншăн ăна 1 пин тенкĕ укçа, коньяк тата канфет парса тав тунă.

ЧР прокуратурин пресс-служби «судра чăрмавсем пулнине» палăртать пулин те патшалăх айăплавçи Якушева преступлени тунине ĕнентерме пултарнă. Çавна май суд унăн характеристикине, ытти саманта шута илсе медицина ĕçченне 3 çул та 6 уйăхлăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă, взяткăн 40 виçи /62 пин тенкĕлĕх/ чухлĕ штрафланă. Приговор вăя кĕмен-ха.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Хастарлăх

Чеменсем тирпейлĕ, пуçаруллă

Культура çулталăкĕ пирки сăмах пуçарсан Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Медведев ăна тахçанах кĕтнине пĕлтерчĕ. Ку енче ял çыннин кăмăл-сипечĕпе сăпайлăхĕ, тирпейлĕхĕпе ĕçченлĕхĕ пысăк. «Çакă пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлеме, çитĕнÿ тума та пулăшать», – тет ял пуçлăхĕн лавне тăххăрмĕш çул туртакан Гаврил Федорович.

● *Г.Медведев /сылтăмри/ вырăнти культура отрасльне ертсе пыракан В.Гордеевпа.*

Хастар та пултаруллă, çаврăнăçуллă ертÿçе ялта хисеплеççĕ, унăн ĕçне ырă хак параççĕ: тăрăшать, яланах çĕннине шырать, ватти-вĕтти те хисеплет... Юлашки çулсенче районта йĕркелекен культура, спорт мероприятийĕсем те Аслă Чеменсем хутшăнса хастарлăх кăтартмасăр ирттеççĕ. Вăл çеç те мар, вĕсем республика шайне те тухаççĕ. Акă пĕлтĕр Республика кунĕнче чăвашсен ĕлĕкхи йăлимешехине кăтартакан картаран уява пынă хăнасем те тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. Сĕтел çинчи кăпăшка çăкăр авал тарсăр пиçмен: тырра çурлапа вырнă, кĕлте тунă, тăпачăпа çапнă, авăртса кĕрпе-çăнăх хатĕрленĕ... Ялти ватăсен кĕлечĕсенче авалхи ĕç хатĕрĕсемпе юр-вар савăчĕсем те упранса юлнă.

Иртнĕ çулталăкра администраци пурнăçĕнче асра юлнă самант сахал мар. Медведевсен туслă çемйи республикăри ял тăрăхĕсен хушшинче йĕркеленĕ хĕллехи спартакиадăра район чысне хÿтĕлесе çĕнтерÿпе таврăнчĕ. Халăха сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарса пырас тĕллевпе иккĕмĕш çул ĕнтĕ «Сывлăх кунне» ирттереççĕ. Эрнере икĕ хутчен шкулти спорт залне пухăнса физзарядка тăваççĕ. Э.Медведева, З.Кузьмина, Л.Иванова, Н.Портнов «урока» пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ.

Ял уявĕсене, чăваш йăлийĕркипе çыхăннă Сурхури, Çăварни тата ытти уява халăхпа кăмăллăн ирттересси те çирĕпленнĕ. Ку йăлана малашне те пăрахăçласшăн мар. Культура çулталăкĕнче хушма мероприятисем татах пулĕç.

Культурăпа спорт юнашар пулни аван. Унпа пĕрлех вырăнти влаçăн тĕп тĕллевĕ – халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшасси, хамăр пурăнакан вырăна тирпейлĕ те хăтлă тытасси. Ку тĕлĕшпе те администраци тĕлĕрмест. Пĕрикĕ çул каялла çеçчĕ-ха çак тăрăхри урамсенче унта та кунта çÿп-çап куписене, ăпăртапăр йăваланса выртнине асăрхама пулатчĕ. Хальхи вăхăтра çакнашкал йĕркесĕрлĕх çук. Ял çыннисем çĕнĕ йĕркене хăнăхаççĕ: кил-тĕрĕшри кирлĕ мар япаласене михĕсене тултараççĕ, ятарлă кунсенче вара тиесе яраççĕ. Пысăк пĕр хутаçшăн 30 тенкĕ тÿлемелле. Субботниксенче ĕçе йĕркелесе тирпейлеме депутатсемпе ял старостисем те пулăшаççĕ. Акă К.Кадушкин, П.Япаров, В.Бахмисов кирек хăçан та пуçаруллă. И.Волков предприниматель вара пĕлтĕр урамри кĕме-тухма çук вырăна вак чул сарса тирпейлеме пулăшнă.

Аслă Чемен ял тăрăхĕнче 423 хуçалăх, 67-шĕнчен тĕтĕм тухмасть. Ял ватăлса пыни, вырăнсенче икĕ алла пĕр ĕç тупайманни, паллах, пăшăрхантарать, шухăшлаттарать. Ку, тĕрĕссипе, хальхи вăхăтра кашни ялăн «чирĕ». Çапах та йывăрлăхсене пăхмасăр вырăнти влаç халăхпа пĕр чĕлхе тупса тăрăшнине хакламаллах.

■ **Альбина ЕГОРОВА.**

Автор сăн ÿкерчĕкĕ

Асран тухмаççĕ çав çулсем...

Вăрнар районĕнчи кашни шкултах Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине халаллана музей, кĕтес пур. Вĕсенче тăван çĕр ирĕклĕхĕшĕн çапăçнă ентешĕмĕрсен паттăрлăхĕ пирки каласа кăтартакан нумай япала пухăннă. Тискер çав çулсем кунран-кун хыçа юлаççĕ. Апла пулин те шкул ачисем историре тарăн йĕр хăварнă пулăмпа халĕ те кăсăклана ççĕ, тĕпчеççĕ.

Вĕренекенсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çĕнтерÿпе вĕçленнĕренпе 69 çул çитнине халаллана «Ас тăвăм управçисем» республика конкурсĕн районти тапхăрне хутшăнчĕç. Ачасем 2010-2013 çулсенче музей фончĕсене вырнаçтарнă экспонатсемпе паллаштарчĕç. Ăçтан тупнă вĕсене? Камăн япали? Хуçи хăш фронтра çапăçнă? Вăрçă хыççăн унăн шăпи еплерех килсе тухнă? Тата ытти нумай ыйтăва уçăмлатрĕç вĕсем. Кашни экспонат – хăйне евĕр кăсăклă истори, кун-çул, шăпа...

Мăн Явăш шкулĕн вĕренекенĕсем конкурса чăматанра уçнă музейпе хутшăнчĕç. Чăматана вăрçăра пулнă куркана, кашăка, котелока, фляжкăна хунă. Музейра салтаксем тăванĕсем патне çырнă виç кĕтеслĕ çырусем те упранаççĕ. Мăн Явăш шкулĕнчи Çар мухтавĕн музейĕ Чăваш Енре çеç мар, Раççейре те сумлă ят çĕнсе илнĕ. 2007 çулта ăна Пĕтĕм Раççейри вăрçă, ĕç, Хĕç-пăшаллă вăйсен тата право хуралĕн ветеранĕсен Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. Музея В.Толстов 25 çул ертсе пынă. Вăл ырă çимĕç акса хăварни куç кĕрет. Ачасем унăн ĕçне малалла тивĕçлĕ тăсаççĕ.

Вăрнарти 2-мĕш шкул вĕренекенĕ Татьяна Иванова тăванĕн – Ф.Ильинăн – хĕрлĕ армеец кĕнеки пирки каласа кăтартрĕ. Кун пек экспонат питĕ сайра, мĕншĕн тесен служба вĕçленнĕ хыççăн салтак кĕнекене хăйĕнче хăварма пултарайман, ăна çар билечĕпе улăштарнă. Федор Ильич вăрçăра связист пулнă. Правительство çыхăнăвĕн уйрăм полкĕнче службăра тăнă.

Аçăм Çырма шкулĕнче вĕренекен Екатерина Ефимова кукашшĕне М.Никифорова аса илчĕ, унăн «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» медалĕпе паллаштарчĕ. Полкра Михаил Никифорович чи çамрăкки пулнă, 17 çул тултаричченех вăрçа кайнă. Çичĕ çул службăра тăнă. Киле 1950 çулта таврăннă. Екатерина медаль çине ÿкернĕ паллăсем мĕне пĕлтерни, унпа кама чыслани çинчен каласа кăтартрĕ.

Жюри /Вăрнарти историпе тăван ен музейĕн директорĕ Е.Шарипова, ача-пăча пултарулăх çурчĕн директорĕ Л.Максимова, С.Иванова преподаватель/ конкурса пĕтĕмлетнĕ хыççăн çакă палăрчĕ: «Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă ентешсем» номинацире – Е.Казакова /Мăн Явăш/, «Вăрçă ахрăмĕ» номинацире Т.Иванова /Вăрнар/ мала тухрĕç.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

Çынсене мĕн пăшăрхантарать?

Раштавăн 18-мĕшĕнче иртнĕ Пĕрлехи информаци кунĕнче гражданселен йышăннă ыйтусен хуравĕсем

Республикăн Аниш /Улатăр/ – Йĕпреç – Канаш çулне юсама палăртнă-и? А.Нистратов, Улатăр районĕнчи Атрать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

ЧР Транспорт министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулта çул-йĕр юсамалли-тумалли программăпа килĕшÿллĕн регион пĕлтерĕшлĕ Аниш – Вăрмар – Канаш – Йĕпреç автоçулăн темиçе сыпăкне юсанă: Канаш районĕнче – 11,3, Йĕпреç районĕнче – 3, Улатăр районĕнче – 5 км.

2014 çулта республика бюджетĕнчен уйăракан укçа виçине кура асăннă çул юсавне малалла тăсма палăртнă.

Çулленхи медицина тĕрĕслевĕсен вăхăтĕнче Улатăр районĕн тĕп больницин хула поликлиникинче вăрăм черетсенче нумай вăхăт ирттерме тивет. Медицина тĕрĕслевĕ валли ятарлă кунсем уйăрма çук-им? Улатăрти пĕрлештернĕ котельнăйсемпе ăшă сечĕсен коллективĕ.

Чăваш Енĕн Сывлăх сыхлавĕн министерстви çапла хуравларĕ: Улатăр районĕн тĕп больницин поликлиникинче ансăр профильлĕ специалистсем кĕçнерни кунсăр пуçне куллен 14-ран пуçласа 16 сехетчен медицина тĕрĕслевĕ ирттереççĕ. Профтĕрĕслев пĕтĕмлетĕвне В.Кедяров врач-профпатолог 10.30-17.00 сехетсенче куллен парать.

Республикăн кăçалхи бюджетĕнче нумай ачаллă çемьесене панă çĕр лаптăкĕсем патне инженери коммуникацийĕсем илсе пыма укçа пăхса хăварнă-и? Улатăрти электричество сечĕсен коллективĕ.

Республика Финминĕ пĕлтерет: асăннă лаптăксем çинче çурт-йĕр çĕклемешкĕн кирлĕ инженери инфратытăмĕн объекчĕсен строительстви валли республикăн 2014 çулхи бюджетĕнчен 9,3 млн тенкĕ уйăрма палăртнă. Çак укçапа ЧР Стройминĕ хуçаланать.

Красноармейски салинчи К.Маркс урамне асфальт сарма палăртнă. Проектпа смета документацийĕ хатĕр. Ĕçсем хăçан вĕçленессе кĕтме пулать? З.Григорьева, Красноармейски сали.

ЧР Трансминĕнчен хурав илтĕмĕр: саккунпа килĕшÿллĕн вырăнти пĕлтерĕшлĕ çулсен строительстви вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне кĕрет, ку ĕçе вырăнти бюджет шучĕпе пурнăçламалла. Красноармейски салинчи К.Маркс урамĕнчи автоçул строительствине республикăн инвестици программине кĕртмешкĕн райадминистрацин ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерствине тивĕçлĕ документсем тăратмалла. Хальлĕхе министерствăна унашкал документсем килмен.

Музыка училищинче çĕнĕ музыка инструменчĕсем /пианино тата концерт роялĕ/ туянмашкăн укçа уйăрма палăртнă-и? О.Шарыкина, Шупашкарти музыка училищин ĕçченĕ.

ЧР Культура министерстви çапла пĕлтерет: музыка инструменчĕсем /4 рояль, цифрăллă 3 пианино, цифрăллă 1 баян тата 1 баян/ туянма республикăн 2013 çулхи бюджетĕнчен 2980 пин тенкĕ уйăрнă. Концерт роялĕ туянма хушма укçа уйăрас тĕлĕшпе бюджет заявкине республикăн кăçалхи бюджетне тÿрлетÿсем кĕртнĕ чухне тăратĕç.

Йĕпреç районĕнчи Климово салинчи çĕнĕ урамсене электрификацилес тĕлĕшпе «Сатурнстрой» подрядчик вĕçлемен ĕçсем çинчен каласа парсамăр. Йĕпреç районĕ.

ЧР Стройминĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – Патшалăх стройнадзорĕ вырăна тухса ирттернĕ тĕрĕслев кăтартăвĕсем тăрăх çитменлĕхсене пĕтерме предписани панă. Ĕçсене пурнăçланă хыççăн Патшалăх стройнадзорĕ пĕтĕмлетÿ парĕ, объекта электричество сечĕсемпе çыхăнтарма май пулĕ.

Раççей çарĕнчи службăна мĕншĕн ĕç стажне кĕртмеççĕ? Сĕнтĕрвăрринчи 11-мĕш профучилище ĕçченĕсем.

ЧР Сывлăх министерствинчен хурав килчĕ: Чăваш Республикин ĕç ветеранĕн ятне ЧР патшалăх наградисене тивĕçнĕ гражданселе параççĕ: хĕрарăмсене – 40, арçынсене – 45 çултан кая мар стаж пулсан. Паллах, çыннăн çулне кура пенси тÿлеме тытăнсан.

Совет çарĕнчи, РФ Хĕç-пăшаллă вăйĕсенчи службăна ЧР ĕç ветеранĕн ятне памашкăн ĕçленĕ çулсен тапхăрĕсене шутланă чухне календарь йĕркипе шута илеççĕ.

Чăнкассинчи ача сачĕ пулнă çуртра клуб е ял тăрăхĕн администрацийĕ вырнаçма пултарать-и? Чăнкассинчи шкула хăçан юсасшăн? Л.Сотникова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăнкасси ялĕ.

Чăваш Енĕн Вĕренÿ министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – вĕрентÿ çинчен калакан саккунпа килĕшÿллĕн муниципалитетсен вĕрентÿ организацийĕсен çурчĕсене тытса тăрасси вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕ шутланать.

Чăнкассинчи ача сачĕн çуртне 1991 çулта тунă – 140 вырăнлăх. 1995 çулта унта пĕтĕмпе те 22 ача çеç çÿренĕ. Çавна май ачасене вырăнти шкула куçарнă, ача садне вара ял тăрăхĕн администрацине панă. Унта клуб уçас тесен çурта реконструкцилемелле. Ял тăрăхĕн бюджетĕнче укçа çуккине кура ăна кăçал реконструкцилеме палăртман.

Чăнкассинчи шкула тĕпрен юсама республика бюджечĕн укçипе усă курмашкăн Сĕнтĕрвăрри районĕн администрацийĕ 2014 çулта комплекслă майпа çурт-йĕр çĕклемелли пилот проекчĕсене суйласа илмелли конкурса хутшăнас ыйтăва тишкерет.

Электроэнергишĕн тÿлемелли çĕнĕ правилăсене вăя кĕртнĕ май счетчик кăтартăвĕсене парасси чăрмавлă – телефонпа пĕлтермелле е кайса памалла, кĕтме тивет. Çак улшăнусем мĕнпе çăлтавланнă, çĕнĕлĕхсем татах пулĕç-и? В.Матвеев, Муркаш районĕ, Чуманкасси ялĕ.

ЧР Конкуренци политикин тата тарифсен патшалăх служби пĕлтернĕ тăрăх – асăннă ыйтусене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтермелли правилăсем йĕркелеççĕ. Вĕсемпе килĕшÿллĕн электричествăпа усă курнине шута илекен прибор пулсан потребителĕн унăн кăтартăвĕсене уйăхсерен килĕшÿре палăртнă вăхăтран кая юлмасăр пĕлтермелли ирĕк пур. Тÿлев виçине шăпах çав прибор кăтартăвĕсем тăрăх палăртаççĕ. Енчен те потребитель кăтартусене памалли правăпа усă курмасан тÿлев виçине малтанхи уйăхсенчи вăтам кăтартусене тĕпе хурса палăртаççĕ.

Потребительсене меллĕ пултăр тесе Чăваш энергосбыт компанийĕ приборсен кăтартăвĕсене пĕлтермелли темиçе мелпе усă курма сĕнет: компани офисĕсем урлă, телефонпа е электрон почтипе, СМСпа, пĕрлехи информаци центрĕ урлă...

Выльăх масарĕ тавра санитарипе хÿтлĕх зонине 500 метр таран чакарма май пур-и? Халĕ вăл 1 км пулнă май ялсен чиккине сарма, ытти ĕçсем пурнăçлама чăрмантарать. А.Семенова, Муркаш районĕ, Анаткас Апаш ялĕ.

ЧР Патшалăх ветеринари службинчен çакăн пек хурав илтĕмĕр: выльăх масарĕсен санитарипе хÿтлĕх зонин лаптăкне улăштармалли процедурăна саккунпа килĕшÿллĕн пурнăçламалла. Роспотребнадзор управленине тивĕçлĕ документсем тăратмалла. Унтан пĕтĕмлетÿ тата тĕпчев кăтартăвĕсене илнĕ хыççăн Роспотребнадзора тивĕçлĕ ыйтупа тухмалла. Унта йышăну тунă хыççăн выльăх масарĕ тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене пурнăçлама тивет. Масар лаптăкне пĕчĕклетессипе çыхăннă информацие Роспотребнадзорăн республикăри управленийĕн сайтĕнче тупма пулать.

Çĕр лаптăкĕн техпаспорчĕ тата тивĕçлĕ акт пур, анчах ăна хăйсен харпăрлăхне регистрацилеме васкамаççĕ – çавнашкал çынсем тĕлĕшпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ саккунлă мĕнле мерăсем йышăнма пултарать? Н.Владимиров, Пăрачкав районĕнчи Напольное ялĕ.

ЧР Пурлăх министерстви хуравлать: патшалăх регистрацийĕ – регистрациленĕ право пуррине çирĕплетекен пĕртен пĕр ĕнентерÿ. Федерацин 122-ФЗ № саккунĕ вăя кĕнĕ хыççăн правăна çирĕплетекен документсене йĕркеленĕ куçми пурлăх тĕлĕшпе правăна обязательнăй йĕркепе регистрацилемелле. Çавна май патшалăх регистрацийĕ тивĕç шутланать. Пурлăх тĕлĕшпе харпăрлăх прави пур тăк – налук тÿлемелле. Эсир асăннă тĕслĕхре патшалăх регистрацийĕ çукки организацие пурлăхран илекен налукран хăтармалли сăлтав мар.

Уйрăм çынсене илес тĕк – налук тÿлемелли тивĕç вĕсен налук хумалли объект тĕлĕшпе харпăрлăх прави пуррипе сăлтавланнă. Регистрацилемен объектсен шутне чакарас тĕллевпе Пурлăх министерстви ялхула тăрăхĕсен администрацийĕсене халăхпа ăнлантару ĕçне ирттерме сĕнет.

Хальхи вăхăтра федераци шайĕнче хуçисене хăйсен çуçми пурлăхне патшалăхăн кадастр шутне кĕртмешкĕн хавхалантарма саккуна улшăнусем кĕртмелли проект хатĕрленĕ. Унта хавхалантармалли майсемпе пĕрлех харпăрлăха регистрацилемен хуçасем тĕлĕшпе административлă мерăсем йышăнассине те палăртнă. Çав шутра – патшалăх пошлинине тÿлеттересси.

Хăйсен компетенцийĕпе килĕшÿллĕн çĕр лаптăкĕсем памалли право пур вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем хушма хуçалăх тытса пымалли, çавнашкал ытти тĕллевлĕ çĕрсем тĕлĕшпе кадастр ĕçĕсене пурнăçлама, патшалăх регистрацине тума пултараççĕ: гражданселен патшалăх регистрацине пурнăçламашкăн заявленисем йышăнма, вĕсен ячĕпе ыйтупа тухма тата ыт.те.

Çĕнĕ Тутаркасси поселокĕ урлă йывăр тиевлĕ транспорт иртессине чармашкăн видеофиксаци камерисем, тивĕçлĕ паллăсем лартма май çук-и? Н.Грацилева, Шупашкар районĕ.

ЧР Трансминĕ пĕлтернĕ тăрăх – йĕркене пăснине регистрацилекен приборсене çул çÿрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕ аварисем ăçта ытларах пулнине кура выраçтарать. Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Тутаркасси поселокĕ çавнашкал вырăнсен шутне кĕмест.

Апла пулин те видеофиксаци системисемпе усă курас енĕпе ĕçлекен дирекци çитес çулсенче Шупашкар районĕнче ятарлă комплекссем вырнаçтарас ыйтăва пăхса тухĕ.

Ятарлă çул-йĕр паллине лартасси пирки калас тăк – асăннă çул вырăнти хăй тытăмлăх органĕн балансĕнче шутланать, апла тăк ку ыйтăва Шупашкар райадминистрацийĕн татса памалла.

Эпир газ тата электричество хакĕсем пысăккишĕн пăшăрханатпăр. В.Тарасов, Çĕмĕрле районĕ, Турхан ялĕ.

ЧР Конкуренци политикин тата тарифсен патшалăх служби хуравлать: электроэнерги тарифĕсене ФСТ палăртать. Чăваш энергосбыт компанийĕ çынсенчен шăпах çав тарифсене тĕпе хурса тÿлев илет. 2013 çулăн иккĕмĕш çурринче халăха тивĕçтерекен электроэнерги тарифĕсем çакнашкал пулнă: хулара – 2,51 тенкĕ/кВтсехет, ялсенче – 1,76 тенкĕ/кВтсехет. Чăвашстат пĕтĕмлетнĕ тăрăх – пĕлтĕрхи раштавăн 30-мĕшĕ тĕлне электричествăшăн хывакан тÿлев виçи тĕлĕшпе республика федерацин Атăлçи округĕнчи 14 субъект хушшинче аялтан виççĕмĕш вырăнта пулнă.

Çут çанталăк газĕн хакĕсене те ФСТ çирĕплетет. Халăха тивĕçтерекен газ хакĕ 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен 14,5% ÿснĕ – кубла метршăн 4,5 тенкĕ. Атăлçи округĕнчи ытти регионпа танлаштарсан эпир аялтан тăваттăмĕш вырăнта. Чи пысăк хак Оренбург облаçĕнче – 8,39 тенкĕ, чи пĕчĕкки Мордовире – 3,86 тенкĕ.

РФ Правительстви монополисен тарифĕсем ÿсесрен сыхланас тĕллевпе кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пĕчĕклетекен 0,7 коэффициентпа усă курма йышăннă, çавна май газ тата электроэнерги хакĕсем 4,2% ытла мар пысăкланăç. 2014 çулăн пĕрремĕш çурринче халăха сутакан электричество хакĕ иртнĕ çулăн иккĕмĕш çурринчи шайрах юлнă. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хула çыннисемшĕн унăн хакĕ 2,61 тенкĕ/кВтсехет пулĕ, ял çыннисемшĕн – 1,83 тенкĕ/кВтсехет. Çавна май ÿсĕм пĕлтĕрхи раштаврипе танлаштарсан 4% пулĕ.

Çĕмĕрле хулинчи икĕ урамра «Парнас» ООО электрификаци ĕçĕсене вĕçлемен. Пулăшу ыйтатпăр. Çĕмĕрле хулинче пурăнакансем.

ЧР Стройминĕнчен Çĕмĕрлери Благовещенски тата Хыр урамĕсене, Çĕмĕрле ялне электричествăпа тивĕçтермелли объект тĕлĕшпе Арбитраж судне «Парнас» ТСКпа тунă килĕшĕве пăрахăçлама, унран укçа шыраса илме тепĕр хут тавăç тăратни çинчен пĕлтерчĕç. Суд контракта татма, асăннă компанирен 1,9 млн тенкĕ ытла шыраса илме

Пултарулăх

Савнă ялăм вунă çултан...

Çĕрпӳ районĕнчи Сăнав шкулĕнче ачасене чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен, РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Татьяна Петрова сăвă-калав хайлама кăмăллакансемпе уроксем хыççăн «Çамрăк çыравçă», «Радиокорреспондент» кружоксенче занятисем ирттерет. Самана уттипе тан пырас тĕллевпе хăйĕн ĕçĕнче çĕнĕ технологисемпе анлă усă курать, вĕренекенсене пултарулăха аталантарма ирĕклĕ темăсем сĕнет. Татьяна Николаевна ăс панă 20 ытла ача чăваш чĕлхипе литература çулне суйласа илнĕ.

● *Тăван сăмахлăха юратакансем. Варринче – Татьяна Петрова.*

Педагога ял ватăлса пыннипе пĕрлех хуçалăхсенче специалистсем çитменни, ытти çивĕч ыйту та хытах шухăшлаттараççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ çамрăксем çуралнă кĕтесрен ан сивĕннĕ тесе уроксенче те, ытти чухне те уçă каласусем йĕркелет.

Нумаях пулмасть вĕренекенсем «Савнă ялăм вунă çултан...» сочинени çырчĕç. Паллашар-ха çамрăк авторсен хăшпĕр йĕркипе.

Вероника АНДРИАНОВА, 9-мĕш класс. «Савнă ялăм – Тăван çĕр-шывăн уйрăлми пĕчĕк кăна пайĕ. Чӳречекасси – трасса хĕрринчех, çавăнпа Çĕрпӳ, Шупашкар хулисене çитме йывăрах мар. Ял илемлĕ вырăнта, юнашарах Энĕш юхса иртет. Пурĕ 4 урам, эпĕ Çамрăксен ятлинче пурăнатăп.

Малтанхи вăхăтра «Рассвет» ЯХПК чиперех ĕçлетчĕ, анчах вăл темиçе çул каялла хупăнчĕ. Шел, ялта ача питĕ сахал.

Вунă çул иртсен вăл татах пĕчĕкленессĕн е пĕтсе ларассăн туйăнать. Апла ан пултăр тесен халăха ĕçпе тивĕçтермелле. Пурăнма çурт-йĕр те кирлĕ.

Яла çамрăклатасси пирĕнтен те нумай килет. Социаллă программăсене пурнăçламалла, çамрăк ăрăвăн кăмăлне тивĕçтермелле, укçа-тенкĕпе хавхалантармалла».

Ирина ДИМИТРИЕВА, 7-мĕш класс. «Ватăсем каланă тăрăх – халĕ эпир пурăнакан вырăнта ĕлĕк вăрман пулнă. Çавăнпа хресченсем сахал çĕрпе тертленнĕ.

1780 çулсенче Тĕнсĕр ялĕн вырăнне Иван ятлă çын куçса килнĕ, çурт лартнă. Вăл тĕне кĕмен. Çавăнпах яла Тĕнсĕр ят панă. Апла пулин те вырăнĕ хитре, çутă.

Ял пысăках мар. Çынсем чунпа пуян, ĕçре хастар. Кашниех хăйĕн çуралнă кĕтесне упрасшăн. Çавăнпа та вăл вунă çул иртсен те малалла аталанасса шанатăп».

Василий ИВАНОВ, 9-мĕш класс. «Ункăçум тавраллах улăхçаран, вăрман, Ункă шывĕ. Вырăнĕ илемлĕ пулсан та юлашки çулсенче халăх йышĕ палăрмаллах чакрĕ. Ытларах ватăсем пурăнаççĕ. Тахçан шавласа çеç тăнă ялта паян шăплăх хуçаланать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче крахмал завочĕ ĕçленĕ. Халĕ вăл çук.

Кунсерен Шупашкартан Ункăçума çити автобус çӳрет. Халĕ ялта пурăнма лайăх, хăтлăх çителĕклĕ. Апла пулин те çамрăксем хулана çул тытаççĕ. Яла ватăлма парас мар тесен çитĕнекен ăрăва илĕртме условисем туса памалла. Чи малтанах ĕçпе тивĕçтермелле. Пушă вăхăта усăллă ирттерме кану вырăнĕ е спорт комплексĕ пулсан аванччĕ. Вĕсене, паллах, кашни ялтах тума май килмĕ, анчах темиçешĕн пĕрре пулсан тем пекехчĕ. Вара демографи лару-тăрăвĕ вунă çул иртсен те япăхланмĕ».

Олеся АНАНЬЕВА, 10 «а» класс. «Эпĕ пурăнакан Вăрăмçутра мĕн пурĕ те 77 кил çеç, апла пулин те пуринче те пурăнмаççĕ. Ялта икĕ лавкка, культура çурчĕ, фельдшер пункчĕ пур. Çыхăну уйрăмĕпе шкула вара хупрĕç.

Тăван енĕм пирки япăх шухăшлас килмест. Вунă çул çеç мар, çур ĕмĕр иртсен те унăн кун-çулĕ çутă пуласса шанатăп».

Екатерина НИКОЛАЕВА, 9 «б» класс. «Манăн пĕчĕк çĕр-шывăм Елю ятлă. Пысăк мар вăл, 56 кил çеç, виçĕ урама пĕрлештерет. Шел те, пурăнакансен йышĕ кунта та чакса пырать. Хĕллехи вăхăтра çуртсем хупăнаççĕ. Çулла вара – уçăлаççĕ, çынсем пахча çимĕç лартма килеççĕ. Тăван кĕтес сĕрлекен вĕллене аса илтерет. Кĕрлет кăна вăл!

Çакă савăнтарать: Юлашки вăхăтра хула çыннисем хупăнса тăракан пӳртсене туянма тытăнчĕç. Пĕрисем кивĕскере лайăхлатаççĕ, теприсем пăсса хăйсене килĕшнĕ пек çĕнĕрен тăваççĕ.

Халăх туслă пурăнать, нимелле пулăшасси манăçманха. Çынсем уявсенче пĕрпĕрне саламлаççĕ, хăнана çӳреççĕ.

Тăван ялăма вунă çултан кăшт урăхларах курас килет.

Пĕрремĕшĕнчен, çамрăксем валли хăйсене килĕшекен ĕç вырăнĕсем кирлех. Вара вĕсем тĕпкĕчленсе çемье çавăраççех.

Иккĕмĕшĕнчен, пурнăç условийĕ хулари пекех пултăр. Тĕрлĕ лавкка, кафе, кинотеатр уçмалла. Халăх ĕç хыççăн культурăллă канма пултартăр. Пĕчĕк ачасем ялтах – садике, аслăрах ӳсĕмрисем шкула çӳреччĕр, халĕ вара инçене каймалла.

Виççĕмĕшĕнчен, урамсенче те çула асфальт сармалла. Ку чухне нумай çыннăн машина пур. Кĕркунне пылчăкра водительсем епле тертленнине, урамсене çăрнине пурте лайăх пĕлетпĕр.

Ĕмĕтсем пурнăçлансан аванччĕ те, шел, ĕненес килмест. Влаç органĕсем, муниципалитет çителĕксĕр ĕçлеççĕ, яланах укçа çукки çине йăвантараççĕ. Çавăнпах çамрăксем ялта юласшăн мар».

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Çивĕч ыйту

Упраса хăварасчĕ

«Хыпарăн» пĕр номерĕнче К.Васильевăн «Куçран ан çухал, тăван ялăм!» статйине тĕплĕ вуланă хыççăн шухăшăмпа паллаштарас килчĕ.

Хăçан пуçланчĕ-ха пĕчĕк ялсене пĕтерес юхăм? 1929 çулхи раштав уйăхĕнче çĕршыв ертӳлĕхĕ çапла йышăннă: çирĕп хуçалăхсене кулаксен шутне кĕртсе вĕсенчен хăтăлас. Çавна пула кашни ялтах халăх йышĕ 10% чакнă. Хăшĕ-пĕри колхоза кĕрес марччĕ тесе ăçта та пулин тухса кайнă. Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – 1929 çул вĕçĕнчен пуçласа 1930 çул варриччен ялсенчен 320 пин хресчен хуçалăхне кулаксен шутне кĕртсе килйышĕпех Урала, Çĕпĕре, Казахстана ăсатнă. Пирĕн 160 киллĕ Мереченрен /Тутарстан, Аксу районĕ/ 16 çемьене те пуç янă. Тата 9-шĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăха сивлесе ялпа сыв пуллашнă.

1951 çулта колхозсене пысăклатас тĕллевпе 2-3 хуçалăха пĕрлештернĕ хыççăн тĕп ял ыттисен шучĕпе вăй илме тытăннă. Пĕчĕккисем майĕпен халсăрланса пынă.

1961 çулта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене татах пысăклатрĕç. Çакă нумай яла чухăнлатрĕ. 1959 çулхи çырав тăрăх çĕр-шывра 705 пин ял шутланнă, 1970 çулхи çыравра вара 570 пинĕшне çеç шута илнĕ. 11 çул хушшинче СССРта 135 пин ял çĕр пичĕ çинчен çухалнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче фашистсем 70 пин ялпа поселока тĕп тунипе танлаштарсан мĕн тери пысăк çухату!

1979 çулхи пуш уйăхĕнче КПСС Тĕп Комитечĕпе СССР Министрсен Канашĕ ялсене малашлăхлă тата малашлăхсăррисене уйăрни татах сиен кӳчĕ. Малашлăхсăррисен пĕтмелле иккен. Çакăн хыççăн чăнласах хăвăрт арканма тытăнчĕç вĕсем. Аксу районĕнче Калиновка, Покровка, Хĕрлĕ çăл, Носовка, ыттисем те çухалчĕç.

Мереченри çуртăмăн сийĕ ыттисем пекех улăмлăччĕ. 1970 çулта ăна сӳсе шифер витрĕм. Хуралтăсем, вылăх витисем те юханнăччĕ. Вĕсене юсама стройматериал туянас терĕм. Райĕçтăвкомра çапла каларĕç: «Нименле стройка та ан пуçла. Мереченĕ малашлăхсăр ял шутланать. Колхозăн тĕп усадьбине куçăр, сире валли вырăн уйăрнă». Эпĕ çурт-йĕре юсаймарăм. Анчах ялтан пĕр çемье те тĕп усадьбăна куçмарĕ. Нумайăшĕ хуласенче тĕпленчĕ. Ял çурри ытла пушанчĕ. 40 çул хушшинче 527 çынран ик çĕре яхăн çеç тăрса юлчĕ.

Колхоз вăхăтĕнче ĕне, сурăх, чăх-чĕп фермисем, вăкăрсене самăртма ятарлă вырăн пурччĕ. Мĕн чухлĕ лашаччĕ тата! Çамрăксем валли ĕç çителĕклехчĕ.

Шел, пĕтерчĕç фермăсене. Çамрăк выльăха ютран тиесе килеççĕ те самăртнă хыççăн аша параççĕ. Туянса нухрат самаях пĕтет ĕнтĕ. Ĕç çукран çамрăксем хуласене кайса укçа тăваççĕ. Хăшĕ-пĕри çуртне çĕнетет. Савăнтарать-ха ку, анчах кивĕ те пушă пӳртсем урам сăнне яраççĕ.

Пĕчĕк ялсенче ача сахал çуралнăран шкулсем хупăнаççĕ. Çын нумай вилет, йышĕ вара хушăнмасть.

Яла мĕнле те пулин сыхласа хăварасчĕ. Вырăнти влаç, хуçалăх çамрăксен интересĕсене хӳтĕлессишĕн епле ĕçленинчен нумай килет çакă.

■ **Виктор СИМАКОВ**

Ыйту-хурав

Куянран епле хӳтĕленмелле?

Пĕлтĕр кăнтăрла ăшăтнă, çĕрле шăнтнă вăхăтра сада мулкач пынăччĕ. Çамрăк улмуççин çĕрелле усăнакан турат вĕçĕсене çĕçĕпе каснăн çыртса татнăччĕ. Кăçал та тапăнасран шикленетĕп. Пахчана куянран епле хӳтĕлемелле?

П.ИВАНОВ.
Çĕмĕрле районĕ.

Ыйтăва Николай Семенов пахчаçă хуравлать.

– Хытă сийлĕ юр тăрăх мулкач çăмăллăн çӳрет, çамрăк йывăççемпе хунавсене кăмăллать. Вулăсене хыр, чăрăш турачĕсемпе /йĕпписене аялалла туса/, рубероидпа, сăмаланă картунпа çыхмалла.

Мулкачсем юн тата сало шăршине юратмаççĕ. Вĕсене хăратма салăна туратсем тăрăх сăтăрни те пулăшать. Пĕр пай нафталин тата 8 пай пулă çăвĕ илмелле, хутăштарса сĕрмелле.

10 литр шыва 300 грамм нафталин, 100 грамм пăхăр куперосĕ, 2 килограмм тип çу е солярка, 400 грамм скипидар, 350 грамм хуçалăх супăнĕн ирĕлчĕкне ямалла. Лайăх хутăштарнă хыççăн вулăпа туратсене сĕрмелле е сирпĕтмелле.

Картунран пысăках мар çаврашкасем касса кăлармалла, хура тĕспе сăрламалла. Вĕсене йывăççем тавралла çакса тухмалла. Шурă юра пула хура тĕс лайăх палăрать. Çаврашкасем çилпе кăшт чӳхенни те чалăш куçсене хăратать.

Армути шăрши те сивĕтет вĕсене. Кĕççене е кивĕ кăçата алă лаппи пысăкăш касса çулăм çинче ĕнтмелле те çиппе туратран çакмалла. Унăн шăршине вăрăм хăлхасем тӳсме пултараймаççĕ.

Пуçару

Пучинкесем энциклопеди кăларасшăн

Хальхи вăхăтра «энциклопеди» сăмах çăвар уççи пулса тăчĕ. Ăслăлăх кăларăмĕсене вулакансем патне çитерес тĕллевпе кам кăна ĕçлеместши? Коллективсем кăна мар, уйрăм çынсем те тăрăшулăх, пуçарулăх кăтартаççĕ. Хуласен, районсен, ялсемпе поселоксен, тĕрлĕ шайри вĕренӳ заведенийĕсен, фабрикăсемпе заводсен т.ыт.-те. Çавăн пек кĕнекесем кун çути кураççĕ. Ку ыйту ӳлĕмрен те кун йĕркинчех тăрĕ, çынсем ăна татса панă чухне тивлетлĕх-тивĕçлĕх палăрăмĕсене чи малти вырăна хурĕç.

Хыçа хăваракан çулсене, вунă çуллăхсене, унтан ĕмĕрсене вăхăт пĕр сиктермесĕрех шутланă майăн истори хăйĕн çул-йĕрĕпе малаллах кайса пырĕ, анчах вăл кирек хăçан та çын ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăнса тăрĕ, пуласси пĕр унран кăна килĕ. Пытармăпăр: вăхăтăн чарусăр чуппинче тепĕр чухне пурнăç куçăмне асăрхаса илме те çăмăлах пулмĕ. Эпир вара хамăрăн тимлĕхпе тата тăрăшулăхпа унăн пулăмĕсене «тытса юлма» та пултарăпăр. Мĕнле майпа? Çакна пурнăçа кĕртес тесен пирĕн хамăрăн ăсхакăллăхпа ас тăвăма çеç хавшатмалла мар. Вĕсем – çынлăхăн чи лайăх енĕсем.

Шăпах çав шухăшпа хавхаланать те паян Йĕпреç районĕнчи Пучинке салинче ĕмĕрне ирттерекен Анатолий Иванович Петров. «Äçта çуралнă, çавăнта кирлĕ пулнă» текен ваттисен сăмахне ун пиркиех каламан-ши? Ара, çуралнă тăрăхпа тачă çыхăннă унăн кун-çулĕ инженер-строитель дипломне илсен, «Красный партизан» колхоза кĕрекен ялсенче общество çулйĕрне чылай хывнă, ун хыççăн асăннă хуçалăха 13 çул ытла ăнăçлă ертсе пынă, кайран вара район администрацийĕн пуçлăхĕн йывăр лавне 8 çула яхăнах тăвалла талпăнса туртнă çын тивĕçлĕ канăва тухсассăн та кĕрĕк арки йăваласа ларасшăн мар.

«Пирĕн хамăра сăпка сиктерсе ӳстернĕ аттеанне кĕтесне пур енлĕн те тĕплĕн пĕлмелле, – тет ветеран. – Хыçа юлнине, ун хыççăн килекеннине āса хывса ăнланма тăрăшнипе пĕрлех тăван тăрăхра пулса иртекен ырă улшăнусене хак пама вĕренмелле, аслă ăрусем хăварнă пархатарлă йăла-йĕркене малалла хушса-аталантарса пыни обществăна истори ас тăвăмне çухатасран хăтарса хăварма пулăшĕ.

Пуçăма иленнĕ шухăшăмсен тĕрĕслĕхне ентешĕмсене ĕнетерӳллĕн кăтартса парас тесе Пучинке салипе Çирĕклĕ, Савкка тата Çĕнĕ Кĕлĕмкасси ялĕсен энциклопедине хатĕрлесе кăларас тĕллев тытрăм. Вăл ыттисенчен уйрăмрах пулĕ. Пĕрремĕшĕнчен, унăн авторĕ – пĕр журналист е тавра пĕлӳçĕ мар, пĕр шухăш-тĕллевпе пĕрлешнĕ ушкăн. Иккĕмĕшĕнчен, çак кĕнекере Пучинке ял тăрăхĕнчи 4 ялта пурăнакан пур çемье çинчен те кĕскен çырса кăтартни вырăнлă пулĕ. Çакна йышăнмаллах – хальлĕхе эпир хамăр ĕçлесе пурăнакан тăрăхпа унăн çыннисем çинчен ытла та сахал пĕлетпĕр-ха.

Паллах, çак пуçару ăшă сăмаха тивĕçет. Ăна ĕçпе çирĕплетесси йывăрлăх-чăрмавпа тата канăçсăр шыравпа çыхăннине лайăх пĕлет Анатолий Иванович. Пулас энциклопеди валли кирлĕ материалсем пухма йĕркеленĕ ушкăн ĕçе кӳлĕннĕ ĕнтĕ. Яваплă çынсем кашни килте пулнă, кашни çемьен пурнăç çулне тĕплĕн палăртакан кăтартусен ытларах пайне вырăнти «редакцине» – «Красный партизан» колхоз правленине – çитерсе пама та ĕлкĕрнĕ. Çынсем Петровпа ытти хастар пуçарăвне хапăлласа йышăнни çакăнтан та уçăмлăн курăнать: вĕсем, пулас кĕнеке кашни çемье сĕтелĕ çинче выртма тивĕçлĕ тесе, пурте хăйсем пултарнă таран укçа-тенкĕпе пулăшасшăн. Ĕç-хĕл кунашкалах кал-кал пырсан Пучинкесен энциклопедийĕ 2015 çулта – колхоз пĕрлешсе пысăкланнăранпа 65 çул çитнĕ тĕле – кун çути курас шанăç пур.

«Эпĕ ентешĕмсене чун-чĕререн шанатăп, – тет Анатолий Иванович. – Вĕсем пур ĕçе те йышпа, нимелле тума хăнăхнă. Темĕнле йывăр, кăткăс самантсенче те пĕрлешӳллĕ хуçалăха сыхласа хăварчĕç. Пулас кĕнекере иртнĕ вăхăтпа пĕрлех паянхи кун таппи те сисĕнсе тăмалла. Пĕр кил-йыш туйăмĕллĕ çынсене пĕрлештерекен çемьесенче телей, ăнланулăх хуçалантăр тесен хутшăнусен çирĕплĕхĕпе ăсхакăллăхĕ тата кăмăлсен пĕрлĕхĕ чи малти вырăнта пулмаллине лайăх тавçăрса илнĕ пирĕн таврара...»

Анатолий Иванович мана Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай хăйне халал сăмахĕсем çырса парнеленĕ «Чунăм манăн, чунăм» кĕнекине кăтартрĕ. Унта «Пучинке» ятлă сăвă та пур иккен. «Пучинке вăл – таврара пĕртен пĕрре», – хавхаланать сăвăç, авалхи чăваш ялĕн çыннисен ӳсĕм-çитĕнĕвне курса. Çакăн пек чыса тивĕçекен тăрăхра пурăнакан кашни çыннăн аллинче хăйсен тĕп кĕнеки пулмаллах. Ăна «Камай уйне» килекен хăнасем те хапăлласах йышăнасса шанас килет.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**
Йĕпреç районĕ

Шухăш

Паха эмел

Шурă Шупашкарта пурăнатăп пулин те, çуралнă еншĕн тунсăхланăран тата чунăм йăшканăран тăван ялăма кайсах тăратăп. Пĕррехинче мана акă мĕн тĕлĕнтерчĕ.

Шăмат кун кӳршĕсем хуларан эрнере пĕрре ашшĕамăшне курма килекен студентка хĕрĕсем валли мунча хутма шухăш тытнă. Кил хуçи малтан кăмака тасатса кĕл кăларнă. Витре туллиех вăл. Ăна манăн умрах çырма хĕрринче тăкса тăрать. Кунта вăл çеç те мар иленнĕ пулас. Кĕл купи сарăлса тĕмескеленнĕ. Çуркунне урам тăрăх йăлтăртатса юхакан юр шывĕ ăна çырмари пĕвене илсе анать, шыва сĕлкĕшлентерет. Çи-пуç чӳхенĕрен супăньсода кăпăкĕпе те çу каçипех тасамарланать пĕве. Çакă вара унти чĕр чуншăн сиенлĕ. Акă мĕншĕн юлашки çулсенче ялта шапа сасси те илтĕнми пулчĕ.

Кĕл çĕре пуянлатни, унпа удобрени вырăнне усă курма юрани çинчен кӳршĕме пĕлтертĕм. Вăл тăпрашăн та, çĕр улмипе ытти пахча çимĕçшĕн те паха эмел терĕм.

Вĕттинчен нихăçан та шултра пулмасть тенĕрен – ял çынни çуркунне пысăккине кассах çĕр улми вăрлăхĕ хатĕрлет. Ача чухне çырмара пӳрне евĕрлĕ çаврака та тăрăхла чул татăкĕ тупсан епле хĕпĕртеттĕмĕр. Ăнсăртран ӳте шăйăрттарсан е кастарсан тӳрех ăна хырса çăнăхне суран çине сапаттăмăр. Кĕл те çĕр улми касăкĕшĕн çавах. Сĕткене сăрхăнма чарать, лартсан чиртен сыхлать, хуртсене хăйĕнчен сивĕтет. Кӳрше çакăн çинчен каласа ăнлантартăм. «Аса ил-ха, шкул çулĕсенче каникулта колхоз валли ăна лашапа килĕрен пуçтарса çӳреттĕмĕр», – терĕм.

– Вăл çапла пулĕ те-ха, – килĕ еннелле тинкерчĕ икĕ хĕр ашшĕ. – Мăшăрпа иксĕмĕрех пурăнатпăр та – пире нумай кирлĕ-и? Çĕр улми лартма пăрахрăмăр. Ĕçĕ нумай, çитменнине – вĕтелчĕ. Кĕркунне хулана кайса шултринех йӳнĕпе 3-4 михĕ туянатпăр та – çитрĕ пире. Çĕр лаптăкĕнче çынсене курăк актаратпăр.

– Кĕле текех кунта ан тăкăр. Пĕр-пĕр савăтра пуçтарса пырăр. Пĕлтерсен кам та пулин пахча валли килсе илетех, – сĕнтĕм юлашкинчен.

Чĕнмерĕ арçын, шухăша путрĕ. Тĕпленĕ кăçаттипе таплаттарса килнелле утрĕ.

■ **Г.ВАСИЛЬЕВ**

Сăнав

Халĕ āшāрах

Несĕлĕмĕрсем çанталăка авалранпах сăнанă. Тавралăхри тĕрлĕ пулăма, килти выльăх, вĕçен кайăк хăйне мĕнле тытнине пăхса вăл пăсăлассине малтанах пĕлсе тăнă.

Чăваш кĕпĕрнисенче паттăлăх шайĕнче ăна сăнама XIX ĕмĕр вĕçĕнче пуçланă. Улатăрта – 1885, Шупашкарта 1895 çулта çанталăк улшăнассине тишкерме станци уçнă. Вĕсемсĕр пуçне Канашра, Патăрьелте, Пăрачкавра пур. Шупашкар шыв управĕ çинче – икĕ, Сăр, Çавал, Мăн Çавал, Вăта Энĕш юхан шывĕсем çинче пĕрер гидрометеопункт ĕçлет. Чул хула облаçĕнчи Кăрмăшри, Мари Республикинчи Чикмери станцисем Етĕрнепе Муркаш районĕсене çывăх, вĕсенче çанталăк ăçталла каяссине темиçе кун умĕн палăртма пултараççĕ.

Республикăн хальхи лаптăкĕнче пин çул каялла ĕне кĕтĕвĕ малалла иртейми сĕм вăрман кашланă. Хальхинчен чылай сахалрах юхан шывсен хĕрринчи айлăм-тайлăмра улăх-çаран сарăлса выртнă. Çырма-вăрманлă çĕре çурса ваклама та пуçламан. Сăмахран, Çавал юхан шывĕпе юнашарах пысăк темиçе кимĕпе ишме пултарнă. Çу кунĕсем XXI ĕмĕрти пек шăрăх та типĕ тăман, çи виттине сӳсе ывăтакан хаяр çил алхасман.

Чăтлăх вăрман атмосфера сывлăшне пысăк витĕм кӳрет. Çуркунне кун вăрăмланать, çĕр кĕскелет. Хĕвел хĕртсе пăхать – пĕтĕм йывăç-тĕм ăшăнать. Вăрмантан сывлăша ăшă çапать. Вунă ĕмĕр каяллахипе танлаштарсан чăтлăх виçĕ хут сахалрах. Термометрăн хĕрлĕ юпи нультен чылай çӳлерех хăпарсан та унран ăшă сахалрах çапать.

Паян республикăра ял-хула йышăнакан лаптăк пысăк, усă куракан çĕр, выльăх, производствăпа социаллă пурнăç çурт-йĕрĕ нумай. Пурне те çут çанталăк газĕпе ăшăтаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери автотранспорт, техникăн ытти хатĕрĕ куллен пин-пин тонна бензин-дизтопливо çунтарать – йӳçек газ пайтах кăларать. Вăл Çĕр чăмăрĕ таврашĕнчи атмосферăра пухăнать, кислород сахалланать. Унта йӳçек газ нумайланнăран Çĕр ăшă тапхăра куçнă.

Ĕлĕкхипе танлаштарсан тăсмак та сивлек çуркунне пирĕн патра маларах, нарăс уйăхĕн вĕçĕнчех, пуçланать. Çулла ытларах шăрăх та типĕ. Çурла уйăхĕнчен – пĕрмай çумăр. Хĕлле куллен çил.

Çĕр пичĕн çӳлти сийĕнче юр-çумăртан пухăнакан нӳрĕк çу уйăхĕнчех çырма-çатрана сăрхăнса Атăла юхать. Унăн сывлăшри хисепĕ те пĕчĕк. Çулла сывлăш пин çул каяллахинчен ытларах ăшăнать.

Совет тапхăрĕнче тунă пĕвесене юшкăн ларнă, чылайăшĕн гидрохатĕрĕ çĕмрĕк пирки вырăнта шыв 30-50 çул каяллахинчен сахалрах тытăнса юлать. Çĕртме-çурла уйăхĕсенче вăл сывлăша уçăлтармалăх, çумăр пĕлĕчĕ янтăламалăх пăсланаймасть. Ӳсентăрана нӳрĕк пит кирлĕ чух тинĕс енчен çумăр пĕлĕчĕ сайра хутра çеç çитет. Иртнĕ 100 çулта сывлăш температурин çулталăкри вăтам кăтартăвĕ, уйрăмах иккĕмĕш çуррине пысăкланса пынă. Çакна республикăри гидрометеостанцисен пĕтĕмлетĕвĕпе çирĕплетнĕ. Тĕрлĕ вырăнта сывлăш кашни çул /1971-2013 çç./ 0,14-0,18 градус ăшăннă. Шупашкар шыв управĕнчен инçерехри районсенче термометр юпи çулла кăштах çӳлерех хăпарать, мĕншĕн тесен сывлăшра нӳрĕк тĕп хуларинчипе, унпа юнашар районсенчипе танлаштарсан сахалрах. Управран ял-хула еннелле кĕркунне ăшă сывлăш куçать. Шыв йăсăрĕ çуркунне сывлăша кăштах сулхăнлатать, çу варринче, çĕрле, нӳрлентерет, шăрăхра пăртак уçăлтарать.

Çурхи юлашки тăм 1925 çулхи çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче ӳкнĕ. Халĕ вăл çав кунччен маларах, кĕрхи каярах, йывăç-тĕм чалланма пуçласан, ӳкет.

1930 çулта – çурла уйăхĕнче, кĕркунне – тĕксĕм çумăр пĕлĕчĕ республика тӳпинче те малтанхинчен ытларах капланнă. Çакна Çĕр чăмăрĕн пуçĕ /çурçĕр пайĕ/ лайăхрах ăшăннипе ăнлантармалла.

Чăваш Енре çанталăк улшăннине кăтартакан паллăсем – ӳсен-тăран çитĕнсе улмаçырла, вăрлăх паракан тапхăр 20 кун таран хушăнни, 14 талăк кая юлса хĕл ларни, çуркунне 8-10 кун маларах юр кайни тата атмосфера сывлăшĕ 8 талăк маларах ăшăнни, çĕр ĕçне пуçличчен тăпра 6 кун маларах пиçсе çитни, ĕлĕкхипе танлаштарсан шартлама сивĕ сахалраххи, çу кунĕсем ăшă е шăрăх иртни, нӳрĕк çĕре 10-20% ытларах ӳкни. Çак улшăнăва пула кăнтăрти регионсенче сарăлнă улма-çырлана, пахча çимĕçе пирĕн патра та туса илме пулать.

Çанталăкăн начар енĕсене те палăртас килет: хĕлле çеç мар, çуркунне-кĕркунне те çил алхасать, çулла сывлăш – типĕ, кĕркунне – нӳрĕм. Сăмахран, пĕлтĕр тата виçĕм çул çумăр ял ĕçченĕсене тырпула, çĕр улмине, пахча çимĕçе пухса кĕртме чăрмантарчĕ. Ял хуçалăх культурисене темиçе çулта пĕрре пăр çапса каять, шалкам çумăр, çил тӳнтерет. Тăпрари тутлăхлă япаласене шыв юхтарать.

Чӳк, раштав уйăхĕсенче çанталăк ăшă, йĕпе юр е çумăр çăвать. Кăшарни тĕлне çеç çеç сивĕтет.

■ **Юрий КАЗАНКОВ,**
ял хуçалăх ăслăлăхĕсен кандидачĕ

Сигнал

Пĕчĕк автоçулсен пысăк нушисем

Хĕллехи вăхăтра çанталăк улшăнса тăнăран автоçулсем конькипе ăмăртса ярăнмаллах çуталса ялкăшаççĕ. Çĕрпӳ хулипе Красноармейски салине çыхăнтаракан трасса та çавах. Вăхăтра тасатманран, хăйăр е урăх материал сапманран автотранспорт инкек-синкеке лекме пултарать. Çакăн пирки «Чăвашавтоçул» АУО генеральнăй директорĕ Виктор Разумов мĕн шухăшлать-ши? Çавăн пекех Виктор Васильевич хăйне пăхăнса тăракан тытăмри Трак - Мăн Упи тата Вăрмар - Энĕшпуç автоçулсен хуçисенчен те çирĕпрех ыйтасса шанас килет.

■ **Антолий ФИЛИППОВ,**
журналист

Кăларăма Валентин ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.

Сиплевçё

Пуç ыратнинчен

Шăнса чирленипе пуç ыратсан корица çăлăнăç вырăнёнчех. Техёмлёхе /чей кашăкён 1/5 - 1/4 пайё те çителёклё/ ăшă шыв кăштах хушса çăра хăйма пек пуличчен пăтратмалла, çамка çине хумалла. Кунсăр пуçне, корицăпа кирек хăш ўсёмри çынсем те усă курма пултараççё, вăйсăрланнисемшён, ватăсемшён вăл уйрăмах лайăх – вăй кёртет, чёрене çирёплетет. Корицăпа вётетнё мускат мăйăрён /1/8-1/4 чей кашăкё чухлё илмелле/ хутăшё те паха. Шыв вырăнне сёт ямалла. Çак хутăша та çамкана сёрмелле.

Пёр чёптём вётетнё хура пăрăç пуç ыратнине хăвăртах ирттерет. Ăна 1 чей кашăкё сар çупа хутăштармалла, сăмсана е сăмса хăвăлёсене сёрмелле. Çакнашкал хутăша çавăн пекех чили пăрăç çăнăхёпе пуç вăйлă ыратсан сипленме те хатёрлеççё. 1 чей кашăкё пăрăça 1 чей кашăкё ăшăтнă сар çупа хутăштармалла, сăмса хăвăлёсене сёрмелле. Пуç ыратни иртет, сăмсаран лăймака тухать. Малтанах сăмсана чёпётме пултарать, çапах та çакă хăвăртах иртет. Чили пăрăç лексен алăсене çуса тасатма кансёр /уксуспа сăтăрма пулать/, çавăнпа крем хатёрленё чухне резина перчеткепе усă курмалла.

Тутлă та, усăллă та

Яшка пылак пăрăçпа

1-ер суханпа кишёр, пылак пăрăç /çурри те çитет/, 2 апат кашăкё ўсен-тăран çăвё, 1 литр çурă аш шўрпи, 3 çёр улми, тутине кура тăвар кирлё.

Аш çаврисем: 300 грамм аш фаршё, 1-ер çăмартапа сухан, петрушка, тăвар, пăрăç кирлё.

Фарша ўсен-тăран çăвёпе ăшаланă сухан, çăмарта, тăвар, пăрăç, типётнё петрушка хушмалла, пăтратмалла. Аш çаврисем тумалла. Сухана çурма çаврашкасем туса турамалла, кишёрпе пăрăça – тăваткалласа. Сухана ўсен-тăран çăвё хушса кăштах ăшаламалла, кишёрпе пăрăç хушса çулăм çинче тата 3-5 минут тытмалла. Кăштах шыв хушма юрать.

Шыв е аш шўрпи янă кастрюле çулăм çине лартмалла, тăвар хушмалла. Вёреме кёрсен çёр улми ямалла, вăйсăр çулăм çинче 25 минут пёçермелле. Шўрпене аш çаврисене ямалла, пиççе çитиччен пёçермелле. Аш çаврисем çиеле тухсан ăшаланă пахча çимёç хушмалла, çулăм çинче тата темиçе минут тытмалла. Çиес умён хăйма, ешёл çимёç ямалла.

Паха маç

Çак маç сурансене, пёçертнине, йытă çыртнă вырăнсене сиплет. Аптекăра синтомицин, стрептоцид тата ихтиол маçёсем туянмалла, пурне те пёр пек виçепе илсе хутăштармалла. Сăрăрах тёслё маç пулать. Салфетка çине сёрсе кирек мёнле суран çине те хума пулать. Салфеткăна кашни 3 сехетре улăштармалла, тепёр кунхине ирхине тата каçхине сиплени те çитет.

3 кунран сурансем пирчеççё.

Çанталăк тёлёнтермёшёсене хирёç тăма вёренёр

Çанталăк улшăннă вăхăтра хăвăра япăх туятăр-и? Çут çанталăк тёлёнтермёшёсене хирёç тăма вёренёр.

● Мунчана е саунăна час-часах çўреме тăрăшмалла. Мунчапа туслашни нерв тытăмне лайăх витём кўрет.

● Çанталăк япăх чухне вар-хырăм та тулли вăйпа ёçлемест, апата ирёлтерекен ферментсем туса кăларасси чакать. Çакнашкал кунсенче тинёс çимёçёсем, пăрça йышшисем, пан улмипе кишёр çимелле, тин сунă сёт, курагапа иçёмрен пёçернё компот ёçмелле. Кăштах йăшсан пăспа пăшăхланă пахча çимёç çисен аван. Сётел çинче çуллă аш, кукăльпўремеч таврашё, чипс, тётёмленё апатсем ан пулччăр.

● Организма пиçёхтермелле. Вёри тата лёп душ ўте сивве хăнăхтарать, иммунитета ўстерет. Спортпа туслашмалла, час-часах уçă сывлăшра пулмалла. Çапах та хăвăра çав-çавах япăх туйсан тухтăр патнех кайма тивет.

Хёллехи вăхăтра шăланпа, катăркас çырлипе, усăллă ытти ўсен-тăранпа чей вёретсе ёçни лайăх. Кăштах пыл хушмалла. Тёслёхрен, мелисса чейё юн тымарёсене тасатать, юн пусăмне чакарать.

Вăраха кайнă бронхитран

200-шер грамм çăнăх, теркăпа хырнă кăшман, пыл, услам çу, алоэ /касиччен 3-5 кун шăвармалла мар/, хăймаллă сёт, спирт, ыхра, какао çăнăхё, сурăх çăвё тата 12 çăмарта шурри илмелле.

Пёрле хутăштарса пăтратмалла, вёреме кёриччен çулăм çинче тытмалла /вёретме юрамасть/. Сивёнсен тёттём вырăна 12 кунлăха лартмалла.

Апатчен кунне 3 хут 1-ер апат кашăкё çимелле.

Сунасран халăх мелёсем пулăшаççё

Сунасран сипленме ухмах йывăççин курăкё /багульник/ пулăшать. 1 апат кашăкё курăка çур стакан ўсен-тăран çăвне ямалла, шыв мунчинче çур сехет тытмалла. Сивёнсен сăрăхтармалла. Кунне 3-4 хут сăмса хăвăлёсене 2-3-шер тумлам тумлатмалла.

Çакнашкал мелпе те усă курма пулать. 2 чей кашăкё вётетнё курăка вёренё 1 стакан шыва ямалла, вăйсăр çулăм çине лартмалла, шыв çурри таран чакиччен вёретмелле. Ун хыççăн шёвеке ўсен-тăран çăвёпе хутăштармалла /1:9 виçепе илмелле/, духовкăна 5-7 минутлăха лартмалла. Сăмсана кунне 2 хут тумлатмалла.

Çак курăкпа çу та хатёрлеççё. 1 апат кашăкё ухмах йывăççин курăкне вётетсе 100 мл олива е ўсен-тăран çăвне ямалла, çутă лекмен ăшă вырăна 3 эрнелёхе лартмалла. Савăта кашни кунах силлесе илмелле. Ун хыççăн сăрăхтармалла. Кунне 4 хут сăмсана 2-шер тумлам тумлатмалла.

Ыйхă вёçсен

Çулланнă çынсенчен нумайăшё ыйхă килменнипе асапланать. Катăркас çырлин чейё канлёх кўрет. 2 апат кашăкё вётетнё çырлана вёренё 1 стакан çурă шыва ямалла, шыв мунчинче 15 минут тытмалла, сăрăхтарса ёçмелле. Çак шёвек чёре ыратнипе аптракансемшён те усăллă.

Антонина ДОЛГОВА хатёрленё.

Ас тăвăм

Салтакăн чи пысăк телейё

ЧР Патшалăх хальхи вăхăтри истори архивёнче, архивсен пёрлештернё фондёнче, Тăван çёр-шывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçин ветеранён, ЧР культурăн тава тивёçлё ёçченён Аркадий Самаринăн /1919-2000/ документчёсем упранаççё. Аркадий Алексеевич çуралнăранпа кăçалхи кăрлачра 95 çул çитрё. Тёлёнмелле çак çын пирки вулавçăсене каласа кăтартас килет.

Кам-ха вăл, ăçта çуралнă, мён ёçлесе пурăннă?

Хусан кёпёрнинчи Шупашкар уесне кёнё Çатракассинче /халё Сёнтёрвăрри районё/ кун çути курнă йёкёт Улатăрти ўнер училищине пётерсен пёр çулталăк Канашри 1-мёш вăтам шкулта ёçленё. Анчах та уроксен сехечё сахал пулнипе унтан кайма тивнё. Шăпа ăна республика шайёпе ёçлекен колхоз театрне илсе çитернё, вăл унта художник-постановщика вырнаçнă. Аркадий Самарин театрăн режиссерёпе Василий Фроловпа паллашнă, малалла вёсем çывăх туссем пулса тăнă.

1942 çулхи нарăс уйăхёнче Аркадий Алексеевич хăй ирёкёпе фронта тухса кайнă. 108-мёш стрелок дивизийён связисчё çапăçури паттăрлăхшăн Хёрлё Çăлтăр тата II степень Тăван çёр-шыв Аслă вăрçин орденёсене, тёрлё медале тивёçнё.

Вăрçă çулёсене аса илсе А.Самарин çапла çырнă: «... Çёнтерў парачёччен эпё 4500 çухрăм утса тухнă! Çакăн пек çул тунă манăн тăван стрелоксен 108-мёш, Ленин орденёллё, Хёрлё Ялавлă дивизийё! Эпё Мускаври Çёнтерў парадне хутшăнма тивёçрём. Пёрремёш репетици 1945 çулхи çу уйăхён вёçёнче Штеттин хулин çар плацёнче иртрё. Çав вăхăтра унта 2-мёш Белорусси фронтчё вырнаçнăччё. Нимёç хули тăрăх тикёс те хитрен утнă май эпир, полксенчен, дивизисенчен, армисенчен пынăскерсем, Мускаври парадра асăннă фронт ячёпе утасси пирки шухăшламан та. Çёр-шыв тёп хулинчи Белорусси вокзалёнче кётсе илни нихăçан та асран тухас çук. Колоннăна Мускав çыннисем казармăсем таранах ăсатрёç. Ватă пёр хёрарăм куççулё витёр çапла каларё: «Килте сире мён тери кётеççё вёт!» Тăван ялне таврăнсан фронтовик унта тытăнса тăман, Шупашкара килнё. Иккёмёш колхоз театрё Йёпреçре ёçленине пёлнё те унта тухса кайнă. Режиссерё тата директорё çав-çавах тус-юлташё Василий Фролов пулнё.



● *А.Самарин ёç вăхăтёнче.*

Аркадий Самарин художникра ёçленё пулсан та рольсем те калăпланă. Вăл «Çёмёрт çеçки çурăлсан» /Андрей Иванович/, «Полк ывăлё» /Горбунов/, «Голубая двойка» /Бургомистр/ спектакльсенче вылянă.

Колхоз театрё хыççăн педагогика, культура тытăмёсенче ёçленё, парти енёпе те палăрнă. Çапах та чун киленёçне пултарулăхра тупнă. Тăван çёр-шыв паттăрёсене ўкернё, паянхи пурнăça сăнланă. Паллăрах ёçёсем çаксем: «Мария Соболевскаян паттăрлăхё», «Разведчиксем», «Ăсату», «Совет Союзён Геройё С.И.Илларионов», ыттисем.

■ **Мария БЕЛКОВА**

Тамаша

«Салам», – тесе те каламарёç

Пёлтёр Канаш районёнчи Вăтакас Татмăшри вăтам шкула тёпрен юсаса çёнетрёç. Строительсем шăрăха та, çумăра та уямасăр тăрмашрёç. Халь пăхатăн та чун савăнать: тулаш енчен те, шалтан та ялкăшса кăна тăрать вёренў керменё.

Ырă улшăнусем вёренў ёçёнче те пулассăн туйăнать, çёнё стандартсене кунта та çине тăрсах алла илме меллё. Анчах пёлетпёр-çке: хăш-пёр ёçе чуххăмăн пурнăçлани ырри патне илсе пымасть. Çакă канăççăрлантарчё кăçал нарăс пуçламăшёнче вёренсе тухнисем валли хатёрленё концерта курсан.

Маттур та иккен Татмăш ачисем: илемлё юрлаççё, ташшисем те килёшўллё. Сцена çине тухса сăвă калама та, шўтлеме те вăтанмаççё. Анчах... вёсем чăвашла шалтах маннă. Саççим! Акăлчанла та пёлеççё, итальянла та çаптараççё, вырăсла пирки каламастăп та. Акă сцена çине чăвашла тумланнă хёрсем тухрёç. Тинех тăван юрă-кёвё валли черет çитрё пулё тенёччё. Çук çав, Кубань майрисен юррине тăсса ячёç.

Уяв малалла пычё. Черетлё ушкăн сцена çине тухрё те çўлелле пăха-пăха сăх сăхма пуçларё. Тем пулман-ши тесе шиклён пăхса илчёç куракансем пёр-пёрин çине. Кёçех музыка кёрлесе кайрё те «турă чурисем» ура хуçса ташша ячёç. Тем каласшăн пулчёç ёнтё апăршасем. Куракансем çапах шёпёр-шёпёр алă çупрёç.

Программа вёçне ячёшён тенё пек чăвашла темиçе номер кёртнё. «Çак юрă-кёвёпе концерта пуçланă тăк мёнле лайăх пулатчё», – текелеççё çумра ларакансем тăваллăн алă çупнă май.

Вёренсе тухнисен ячёпе пухăннисене педагогика наукисен кандидачё О.А.Фомина саламларё. Кёскен те витёмлё, тăван чёлхепе каласрё вăл. Анчах концерта ертсе пыракансем те, шкул директорёпе ял тăрăхён пуçлăхё те «салам» тесе те пулин каламарёç, вёсем те чăвашла «маннă» иккен. Сценăна илемлетекен те темшён тăван чёлхепе эрешсенчен вăтаннă.

Хăй вăхăтёнче Вăтакас Татмăшри шкулта чăваш чёлхипе халăх культури тивёçлё вырăнта пулнă. Кунта тăван литературăпа тавра пёлў кружокёсем ёçленё, алăпа çырса журналсем кăларнă. М.А.Андреев историк, сăмахран, Египет пирамидисем çинчен каласа панă чух та урок вёçёнче тăван халăх аваллăхё пирки сăмах пуçарма май тупатчё. В.П.Смирнов учитель вара физикăн кăткăс саккунёсене урокра чăвашла ăнлантарса пама тăрăшатчё. Учительсем халăх инструменчёсен оркестрё йёркелесе чăваш кёввисене каласа панине нихçан та манас çук. Ялти клубра пёррехинче П.Н.Осиповăн «Айтар» пьесине лартрёç, тёп роле Георгий Ильич учитель /шел, ун хушаматне маннă/ тёлёнмелле чаплă вылярё. Шкулта вырăссем те ёçленё, анчах вёсем чăвашла пит лайăх вёренсе çитнёччё.

Çакă аса килчё çўлерех асăннă концерта курса ларнă чух. Пытарма кирлё мар: кăмăла хуçрё ал хапăл хатёрленё программа. Явраплă çак ёçе паянхи шкул умне лартнă тёллевсене ăнлансах кайман çын аллине шанса пани куç кёрет.

■ **Валерий АЛЕКСИН, журналист**

Çёнё кёнеке

«Çёр çулти букварь ватăлман-ха»

Аллăмра – Владимир Ивановпа Елена Толстова çырнă «Столетний букварь для чуваш и его составитель» кёнеке. Ăна чăваш букварьне хатёрлекен Иван Трофимов çуралнăранпа 125 çул çитнине халаллăнă. Çапла, Иван Трофимович Элёк шкулёнчен вёренсе тухса Чёмпёре кайнăранпа та 110 çул иртнё ёнтё, буквăрё пичетленнёренпе пёлтёр 100 çул пулчё.



«Чăваш чёлхине вёренмелли кёнеке патша вăхăтёнче те, совет саманинче те юрăхлă пулнă. Вăл япăх пулма пултарайман: пухса хатёрлўçи – шкул учителё, Константин Иванов поэт ăна ўкерчёксемпе илемлетнё, сăвăсемпе пуянлатнă, тёп редакторё – Иван Яковлев педагог. Вёсен ячёсене ёлёкхи йăлапа кёнеке хуплашки çине çырса пёлтермен, анчах та Иван Трофимович 1912 çулхи Букваре яланах виçё чăвашăн ёçё вырăнне хунă. Чăваш патташлăх педуниверситечён музейёнче вёсем виççёшё те пёр пўлёмре упранаççё. Тăватă хутчен пичетленсе тухнă Букваре пурнăç хăй хакланă. Эпир çапла кăна каласшăн – кёнеке пурăнма вёрентет, çут çанталăка хисеплеме хушать, хамăра хамăр алăпа ёçлесе тăрантарма сёнет, перекетлёхе юратса вёренме хистет. Ячёшён, калăпăшне пысăклатса гонораршăн çырнă ёç мар ку. Паян чăвашла пёлмен ачасене хулăн кёнекесемпе вёрентме пикенетпёр, Букварь вара чăвашла каласакан ачасене тăван чёлхене вёрентекен çўхе кёнеке, ăна кашни ача ăнланать, ăнланнипе пурнăçлама пултарать. Эппин, 100 çулхи Букварь ватăлманха, пăрахăça тухман, паян та усă кўме пултарать»,– уçăмлатаççё авторсем ум сăмахра.

Кёнекере малтанах Иван Трофимов виçё вăрçă паттăрё – Тёнчен пёрремёш, Граждан тата Тăван çёр-шывăн Аслă вăрçисен – пулни пирки пёлтернё. Кунтах унăн çар тумёллё сăн ўкерчёк. Иван Трофимович – патша тата совет орденёсен кавалерё. Вăрçă хыççăн тёрлё вырăнта вăй хунă, çав шутра Канаш хулин райёçтăвком председателёнче те. «Чун çимёçёнче» çавăн пекех букварь оригиналёпе те паллашма пулать. Кунтах – Иван Трофимов çырнă хăш-пёр статья, унăн пултарулăхне Г.Н.Волков хаклани.

«Букварь для чуваш» вёренў кёнекине 1919, 1920, 1922 çулсенче тепёр хут та кăларнă. Иван Трофимович «Çуталла. Шкулта вуламалли 2-мёш кёнеке», куç курманнисем валли хатёрленё букварь авторё те. И.Я.Яковлевпа К.В.Иванова аса илсе мемуарсем те хайланă вăл. Тăван Çёр-шыв умёнче хăйён тивёçне салтак пек те, учитель пек те явраплăн пурнăçланă вăл. Халăхра унашкаллисем пирки: «Вёсем питех те сăпайлă, анчах çитёнёвёсем пысăк»,– тенё. «Çитёнў тăрăшулăха юратать!» – принципа пурăннă вăл.

Кёнеке пысăках мар пулин те унăн тёшши тутлă. Хамăр халăхăн маттур арăсене манманни, вёсем çинчен аса илтерсе тăни, ёçёсене тата та тишкерни паха.

■ **Р.АНАТОЛЬЕВА**

Çуралман ача хўхлевё – пушкăртла

«Çуралман ача хăйне пурнăç пама ыйтса тархаслани – пётём тёнче инкекё. Чуна шарт сиктерекен çак сасă нумай чёлхепе янăрамалла», – çапла каланăччё хăй вăхăтёнче Раççей Вёренў академийён академикё Г.Н.Волков Николай Ишентейён «Çуралман ача сасси» поэмине хакласа.

Хисеплё ăсчахăмăр пуçарнă çак ёç хăй пурнăçран уйрăлсан та чарăнса лармарё. Утăм хыççăн утăм малаллах шурё. Халё те вырăнта тăмасть – тăвалла пулсан та малаллах талпăнать.

Поэма-асăрхаттарăва Геннадий Орт поэт çармăсла куçарнине, вăл Йошкар-Олари «Ончько» /Малалла/ журналта çапăнса тухнине эпир пёлтернёччё. Халё пирён пата çёнё тепёр хыпар çитрё: çуралман ача чуна çурасла сасси пушкăртла янăрама пуçланă. Пушкăртсен общественно-политика тата илемлё литература журналё «Ватандаш» /Саманташ/ Н.Ишентейён «Çуралман ача сасси» хайлавне хăйён вулаканё патне çитерчё. Гуманист позицине çўле çёклекен хайлава пушкăртсен паллă поэчё Аниса Тагирова куçарнă.

Пушкăрт Республикин тава тивёçлё ёçченё А.Тагирова куçарура чылайранпа ёçлет. Вăл тăрăшнипе Анна Ахматовăн, Марина Цветаевăн, Александр Пушкинăн тата ытти поэтăн паллă хайлавёсем пушкăртла янăраççё. Чăваш поэмине те вăл кăсăкланса куçарнă.

Çитённисем çылăха кёнёшён çуралас ача инкек курни пурнăça илемлетмест. Ку çеç-и? Явраплăха каланă çак шухăш кирек мёнле халăхра та, кирек хăш культура ытамёнче те чуна шарт сиктерес пёлтерёшне çухатмасть. Кăмăл-сипет явраплăхёшён чикё çук.

■ **Н.ГЕОРГИЕВА**

Çёпёр ăстин пуянлăхё

Тюмень облаçёнчи Ялуторовск хулинче пурăнакан Татьяна Тарасова чёнтёр çыхма тата пир тёртме ача чухнех вёреннё. Ашшё те, амăшё те ал ăстисем пулнă. Шел, хёр ача пёчёклех инвалид пулса тăнă. Анчах Татьяна кирек мёнле йывăрлăхра та пуç усман. Шанăç çухалнă самантсенче вăл ал ёçёпе аппаланса киленёç тупнă, ырра кётсе ёмётленнё.

Ăста тёрлё меслете тёпе хурса тёрлет, чёнтёр çыхать, капрон çиппе ирёлтерсе кавир тёртме пёлет. Нумаях пулмасть Якушкинăн музей çуртёнче Т.Тарасовăн ал ёçёсен куравё уçăлнă. Тёрёллё ал шăллисене, салфеткăсемпе сётел çиттисене курсан ăстан пултарулăхёнчен чăннипех те тёлёнетён. Музей фондёнче те унăн ылтăн аллисем витёр тухнă япала сахал мар упранать.

Татьяна вăтăр çула яхăн ăсталăхне аталантарать. Хăй каланă тăрăх – пёлменни, вёреннмелли, çённи тата нумай. Вăл çавăн пекех ал ёç техникин тёрлё меслечёпе ăсталăх класёсем ирттерет. Хулара, облаçра иртекен конкурссене, куравсене час-часах хутшăнать. Çитёнўсен пухмачёнче тёрлё шайри наградăсен шучё çулран çул ўссех пырать.

■ **Маргарита ЧЕКУНОВА**

Тем те пёр

Раççейре ача йышё сахал шкулсене пур çёрте те хупаççё. Владимир облаçёнчи Марково салинче тёлёнтермёш пулса иртет: вырăнти шкулта вёренекенсен йышё ўссех пырать.

Нумаях пулмасть çеç кунта 5 ача кăна вёреннё, халё вёсен йышё 100-тен те иртнё. Марково ялёнчи шкула паян çывăхри Покров хулинче пурăнакансем те хăйсен ачисене вырнаçтарасшăн, автобуспа çўретме укçа та хёрхенмеççё. Вăрттăнлăхё çак шкул чаплă йышши гимнази евёрлё пулнинче – ачасене кунта бал ташшисене, француз чёлхине, хăйсене лайăх тыткалама вёрентеççё.

Шкулта усал сăмахсемпе, кăнттам каласма, чăмлак чăмлама, карас телефонёпе усă курма /чухăнрах юлташёсем кёвёçесрен/ юрамасть. Кунта кăмăл-сипет ыйтăвёсем тёп вырăнта, бал ташшисем валли тумсем çёлеççё.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пёлтерў
Тел.: 28-83-70. 316-мёш пўлёмре йышăнаççё.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Администрация Батыревского района Чувашской Республики сообщает о наличии земельного участка сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства для предоставления в аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:110101:78, площадью 79930 кв.м., местоположение: установлено относительно ориентира в юго-восточной части кадастрового квартала 21:08:110101, расположенного в границах участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Батыревский район, Туруновское сельское поселение.

За справками, информациями, претензиями обращаться в отдел сельского хозяйства, экологии, экономики, земельных и имущественных отношений администрации Батыревского района Чувашской Республики в течение месяца со дня опубликования в газете. Дополнительная информация по тел. 8(83532) 6-18-37, 8(83532) 6-14-26.

Администрация Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 7/533, муниципального образования Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Новобуяновское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:060401:41.

Заявления принимаются с 21 февраля в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Новое Буяново, ул. Комсомольская, д. 30. тел.8(83548)2 -58-63. факс: 2-58-39

Администрация Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 16/533, муниципального образования Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Новобуяновское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:060401:41.

Заявления принимаются с 21 февраля в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Новое Буяново, ул. Комсомольская, д. 30. тел.8(83548)2 -58-63, факс: 2-58-39.

Администрация Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 19/533, муниципального образования Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Новобуяновское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:060401:41.

Заявления принимаются с 21 февраля в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Новое Буяново, ул. Комсомольская, д. 30. тел.8(83548)2 -58-63, факс: 2-58-39.

Администрация Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли в собственность, находящейся в общей долевой собственности, размер земельной доли 35/533, муниципального образования Новобуяновского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики, по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, Новобуяновское сельское поселение, кадастровый номер 21:26:060401:41.

Заявления принимаются с 21 февраля в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Новое Буяново, ул. Комсомольская, д. 30. тел.8(83548)2 -58-63, факс: 2-58-39.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики просит считать недействительным объявление опубликованное в газете "Хыпар" от 25 января 2014 года №№13-14/26419-26420 по поводу предоставления земельного участка в аренду из категории "земли сельскохозяйственного назначения" для ведения сельскохозяйственного производства с кадастровым номером 21:17:080901:1417, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, площадью 232910 кв.м.

ПРОДАЮ

7.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

Паллă ентешёмёре халалланă

Мурманск облаçёнчи тавра пёлў музейёнче В.Чапаев çуралнăранпа 127 çул çитнине халалланă ăслăлăх практика конференцийё иртрё.

"Василий Иванович Чапаев тата унăн йăх тăсăмёсем пирки халăха пёлтересси – пирён тёп тивёç, – мероприятие уçнă май палăртрё Мурманск облаçёнчи чăваш культура пёрлёхён канашён председателё Валериан Гаврилов. – Чапаевăн паттăрлăхё пирки çёр-шывра пёлмен çын çук. Анчах кунçулне халё те туллин уçса паман, унăн биографийёнче "шурă вырăн" сахал мар. Паллă ентешёмёрён шăпи паян та каластарать, историксене чылай çул шухăшлаттарать. Эпир ентешёмёрён харсăрлăхёпе хавхаланса Тăван çёр-шыва хўтёленё, служба тивёçёсене пурнăçланă".

Д.Осипов, А.Кузнецов, М.Арбузова легенда пулса тăнă дивизи командирён паттăрлăхё, унăн çемйи, ачисем пирки каласа кăтартрёç. Вёсен сăмахёнче çённи, халёччен илтменни чылай пулчё. Чăнах та, çёр-шывра пурăнакансенчен нумайăшё ентешёмёр пирки "Чапаев" фильм тăрăх çеç пёлет. Çавăн пекех конференцире В.Чапаевăн ывăлё Аркадий Валерий Чкаловпа пёрле службăра тăни пирки каласа парса тёлёнтерчёç. Ку хыпар чылайăшёшён çёнёлёх пулчё.

Канашлура "Чăваш Ен" чăваш культура обществин ятне улăштарас ыйтăва çёклерёç. Мурманск облаçёнчи чăваш-сен пёрлёхне "Чăваш тăрăхё" ят парасшăн. Обществăн ваттисен канашён йышёпе паллаштарчёç. Вёсем – Мурманскри экономика тата информаци технологийёсен колледжён физвоспитани преподавателё Владимир Чернышов /Канаш хулинче çуралса ўснё/, Мурманск облаçёнчи паллă скульптор Александр Арсентьев /Приморье крайёнчен/, Геннадий Тарасов академик /Шупашкар районёнчен/.

■ **О.ПЕТРОВ**

чăваш халăх хаçачё
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧЁ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙЁ
Федерацин сăхану, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийёнче 2013 çулхи çу уйăхён 31-мёшёнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацийленё
"Хыпар" индексё – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачё" – 54804,
"Чăваш хёрарăмё" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тёп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторё Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тёп редактор çумё-коммерци директорё/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тёп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тёп редактор çумё/
С.Л.ПАВЛОВ /тёп редактор çумё/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайён редакторё/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явраплă секретарь – техника центрён пуçлăхё/
Дежурнăй редактор Н.Д.КОНОВАЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧЁ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧЁ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонёсем: 56-00-67 – директор – тёп редактор; 56-33-64 – тёп редактор çумё; 56-04-17 – тёп редактор çумё; 62-08-62 – секретариат, явраплă секретарь
пайсем: 28-85-01 – общество пурнăçёпе политика пайё; 56-05-21 – журналист тёпчевёсен тата куçару пайё; 56-08-62 – экономика пайё; 56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вёренў пайё; 56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайё; 56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайё; 28-82-91 – корректорсем; 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийё: 28-83-70 – рекламăпа пёлтерўсен пайё; 56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайё
корр. пункчёсем: 8-937-398-75-33 – Хёрлё Чутай, /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йёпреç; 28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзён правленийё
Ёç кунё 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчё» АУ техника центрёнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийёнче пичетленё. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13. 56-00-23 – издательство директорё.
РЕКЛАМĂПА ПЁЛТЕРЎСЕНЕ 316-мёш пўлёмре йышăнаççё. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечё. Калăпăшё 2 пичет листи. Рекламăпа пёлтерўсен чăнлăхёшён вёсене параксанем явраплă.
Хаçатри рекламăсăр тўлевлё информаци материалёсем "Реклама çинчен" федераци саккунён 2 ст. килёшўллён "Аталану çулёпе", "Ят-сум", "Ёç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççё.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 580.